чăваш халăх хаçачĕ

# ХЫПАР

1906 çулхи кăрлачăн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă 1918 çулхи нарăс уйăхĕнчен тĕрлĕ ятпа тухнă 1991 çулхи çурлан 30-мĕшĕнче "ХЫПАР" ятпа тепĕр хут тухма пуçланă

СССР Аслă Канашĕн Президиумĕ 1968 çулхи пуш /март/ уйăхĕн 11-мĕшĕнче "Коммунизм ялавĕ" /халĕ "Хыпар"/ хаçата "ХИСЕП ПАЛЛИ" орденпа наградăланă



"ХЫПАР" никĕслевçи Н.В.Никольский (1878–1961)

21 /26427/ № Юн кун, 2014, нарăс (февраль), 5 Хакĕ ирĕклĕ WWW.hypar.ru

## Саламлатпăр

Чăваш Республикин Пуçлăхĕн 2014 çулхи нарăс уйăхĕн 4-мĕшĕнчи 12-мĕш указĕпе килĕшӳллĕн промышленноçри тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн тата нумай çул тӳрĕ кăмăлпа вăй хунăшăн "Шупашкарти электроаппарат завочĕ" акционерсен хупă обществин ĕçченĕсене – шăратса çыпăçтаракан тата газоплазмăпа касмалли оборудовани наладчикне **Александр Варсонофьевич АНТОНОВА,** Реконт производствин ваннисен корректировщикне **Валентина Николаевна ГРИГОРЬЕВĂНА,** ертсе пыракан инженер-конструктора **Лариса Ивановна МИТЮШИНĂНА "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ПРОМЫШЛЕННОÇĂН ТАВА ТИВĔÇЛĔ ĔÇЧЕНĔ"**;

экономикăпа финанс ĕç-хĕлĕнчи тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн планпа экономика пайĕн пуçлăхне **Татьяна Юрьевна ЖУКОВĂНА "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ТАВА ТИВĔÇЛĔ ЭКОНОМИСЧĔ"** хисеплĕ ят панă.

### *Чăваш Республикин Пуçлăхĕн Указĕ*
### М.Г.Ноздряков çинчен

1. Михаил Геннадьевич Ноздрякова Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕн – Чăваш Республикин финанс министрĕн должноçĕнчен хăтарас.

2. Çак Указ ăна алă пуснă кунран вăя кĕрет.

**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ М.ИГНАТЬЕВ.**

Шупашкар, 2014, нарăс, 3, 11 №.

* * *

Чăваш Республикин Пуçлăхĕн Администрацийĕнче пĕлтернĕ тăрăх – Михаил Ноздряков ĕçрен хăй ирĕкĕпе кайнă. Хăйне 2014 çулхи нарăс уйăхĕн 3-мĕшĕнче ĕçрен хăтармашкăн ыйтса вăл отпускра каннă чухне, кăçалхи кăрлач уйăхĕн 20-мĕшĕнче, заявлени çырнă тата панă. Çак йышăнăва Михаил Ноздряков патшалăх служби питĕ йывăррипе тата яваплипе сăлтавланă. Малашне вăл хăй ăçта ĕçлеме палăртнине пĕлтермен.

*Инкек-синкек*

## Сивве пула...

***Кăрлачăн иккĕмĕш çурри сивĕ тăнине кура çынсем шăнса вилнĕ тĕслĕх чылай пулчĕ. Следстви комитечĕн республикăри управленийĕн следстви органĕсем çавнашкал инкексемпе çыхăннă пĕлтерӳсене пĕтĕмлетнĕ. Хурлăхлă статистика – икĕ эрнере, кăрлачăн 16-31-мĕшĕсенче, Чăваш Енре 12 çын пурнăçĕ татăлнă.***

Кăрлачăн 16-мĕшĕнче Вăрнар районĕнчи Шăхаль ялне килнĕ хĕрарăм 77 çулти ашшĕне хăйĕн çурчĕн çенĕкĕнче тупнă. Ватăскере çийĕнчех больницăна ăсатнă-ха, анчах çăлса хăварма май килмен. Çав кунах Мăн Явăш ялĕнче те ватă çын пурнăçĕ татăлнă. 83 çулти кинемей ӳтне картишре тупнă. Аран-аран çӳрекенскер тула тухнă та ӳкнĕ пулас – тăрайман... Асăннă районти Уравăшсем те çухату тӳснĕ – хăйĕн килĕнче 57-ри арçын шăнса вилнĕ. Трикопа, футболкăпа кăна пулнăскере ĕçрен таврăннă пиччĕшĕ алкумĕнче тупнă.

Канашри пĕр баракра икĕ бомж кăрлачăн 23-мĕшĕнче шăнса вилни пирки эпир маларах пĕлтернĕччĕ. Икĕ кунран вара Шупашкарти Студентсен тăкăрлăкĕнче – 28 çулти çамрăк... Çывăхри нумай хваттерлĕ çуртсенчен пĕринче пурăнаканскерĕн виллине урамра тупнă. Кăрлачăн 27-мĕшĕнче Канаш районĕнчи Вăтакас Татмăш ялĕн урамĕнче 80 çулти кинемей пурнăçĕ татăлнă. Тепĕр кунне ирхине Етĕрне районĕнчи Кĕçĕн Тӳмерле ялĕнче 33-ри хĕрарăмăн, ĕçкĕпе иртĕхекенскерĕн, виллине тупнă. Вăл та урамрах шăнса вилнĕ.

Кăрлачăн 29-мĕшĕнче Çĕрпӳ районĕнчи Первомайски ялĕнче 74 çулти мучи пурнăçран уйрăлнă. Иккĕмĕш ушкăн инваличĕ пĕчченех пурăннă. Ăна кӳрши тупнă. Арçын сивве пула маларах та шар курнăмĕн – тăм илнине пула урин темиçе пӳрнине таттарма тивнĕ.

Уйăх вĕçĕнче Канашра – каллех инкек. Хула хĕрринчи «Солнышко» коллективлă садри хуçисем усă курман дачăра икĕ арçын вилнĕ. Бомжсем унтах пурăннă, дачăна буржуйкăпа хутса ăшăтнă. Ӳсĕрскерсем ку хутĕнче кăмакана хутса янă та çывăрма выртнă пулас – буржуйка сӳннине сисмен. Кăрлачăн 31-мĕшĕнче вара Канаш районĕнчи Çеçпĕлте 46-ри хĕрарăм пӳртне кĕреймен – хăйĕн çурчĕн хапхи патĕнчех вилнĕ. Вăл та эрехпе туслă пулнă теççĕ.

...Çанталăк çемçелчĕ-ха та, çапах хĕл кунĕсенче асăрханулăх кирлех. Хамăр упранни çеç çителĕксĕр, кӳршĕ-аршă, тăван-пĕлĕш мĕнлерех лару-тăрура пулни пирки те манас марччĕ.

**К.АНТОНОВ**

*Канашлу*

# Чăрмавсем пулсан та – малаллах



сар.ru сайчĕн сăн ӳкерчĕкĕ

***Ĕнер Шупашкар районĕнчи ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем, медицина, вĕренӳ, культура, ытти тытăм ĕçченĕсем Чăваш патшалăх академи драма театрĕнче пуçтарăнчĕç. Район администрацийĕн пуçлăхĕ Г.И.Егоров социаллă пурнăçпа экономикăн пĕлтĕрхи аталанăвне тишкерекен доклад турĕ.***

Ял хуçалăх организацийĕсенче иртнĕ çул виçĕм çулхинчен аш 10,3% сахалрах туса илнĕ. Пурăнмалли çурт хута ямалли плана 68% çеç тултарнă. Хуçисем ыйтман, пĕрлехи харпăрлăхра шутланакан пай çĕрне регистраци палатинче шута илтересси кирлĕ пек пулса пымасть. Ишлей ялĕнчи «Уют» управляющи компани энергипе тивĕçтерекенсен умĕнче пысăк парăма кĕнĕ. «Район администрацине тивĕçлĕ документсем тăратчăр тесе çак общество директорĕ патне ыйтупа тухрăмăр, – пĕлтерчĕ Георгий Иванович. – Тĕлĕнмелле те – хурав та пулмарĕ».

Канашлăва килнисем доклада сӳтсе явма хастар хутшăнчĕç. «Атайкасси ялĕ ача сачĕсĕр. Шăпăрлансене ирхине кама шанса хăвармаллине пĕлместпĕр. Ĕçрен таврăнсан çамрăксем пухăнма вырăн шыраççĕ: ялта клуб çук. Ку объектсене хăçан хута ярĕç?» – кăсăкланчĕ пĕрремĕшĕ. «Атайкасси ял тăрăхĕн пуçлăхне вырăнта садик уçас ыйтупа ĕçлеме хушнă, – хуравларĕ Г.Егоров. – Вăл 4 ушкăн валли пулĕ. Ял администрацийĕн çурт проектне тутармалла».

«Федерацин М-7 автоçулăн талăкра 35-40 пин машина иртекен Хыркасси-Кӳкеç çыхăнăвĕнчи транспорта май килнĕ таран ытларах сахаллатас тĕллевпе Атайкассипе Çырмапуç ял тăрăхĕсене автотрассăпа тӳрĕрен хăçан юпĕлентерĕç?» – ыйтрĕ иккĕмĕшĕ, çул хывма пуçласан Йăршу юманлăхне тĕппипех кăкласран пăшăрханаканскер. «Тӳрĕрен çул тăсассине район администрацийĕ татса параймĕ, – терĕ Г.Егоров. – Ăна республика влаçĕсем пăхса тухĕç. Ыйтăва ял çыннисенчен вăрттăн татса памĕç. Вăхăт çитсен пухура сӳтсе явăр».

«Автотрасса проекчĕн иккĕмĕш вариантне тишкерме сĕнчĕç, – калаçăва тăсрĕ Михаил Игнатьев. – Унпа килĕшӳллĕн М-7 Ишлей тĕлĕнче юпленĕ. Хыркасси-Кӳкеç çыхăнури транспорта ирĕккĕнрех çӳреме май туса памаллах. Тӳрĕрен çул хывма тытăниччен ял çыннисене проектпа паллаштараççех».

Апаш ял тăрăхĕн депутачĕ Н.В.Плотников Паçпак ялĕнче пурăнакансем клуб тăвасса, библиотека уçасса чăтăмсăррăн кĕтнине пĕлтерчĕ. Шел те, докладçă хальлĕхе ăна ырă хыпарпа савăнтараймарĕ. «Республика хыснинчен укçа уйăрмасан чылай клуба юсаймăпăр», – пулчĕ хурав.

Нумай ачаллă 12 çемьене çеç çурт тума çĕр лаптăкĕ панă, 6-шĕ ăна хăпартма строительство материалĕ турттарать, ытти ĕç пурнăçлать. «Вăл мĕншĕн вăраххăн пырать?» – пĕлесшĕн пулчĕ Чăваш Ен Пуçлăхĕ.

Нумай ачаллисен умĕнче чăрмав çителĕклех. Çемьесене уйăрма пăхакан лаптăксене инфратытăм хывман. Уйрăммăн илсен вĕсене газ, электричество çитермен. Çавăнпа чылайăшĕ лайăхрах вырăн пама ыйтать.

«Çĕнĕ Тутаркасси поселокĕнчи нумай хваттерлĕ çуртсенче хĕл каçиччен те ăшăнса курайтмастпăр пулĕ. Котельнăя тĕпрен юсама пулăшăр-ха!» – тархасларĕ ача амăшĕ. «Малтан Тутаркасси шкулĕпе садикĕн котельнăйне тĕпрен çĕнететпĕр. Кайран черет темиçе хутлă çуртсене газпа ăшăтмалли котельнăя çитĕ», – лăплантарчĕ район ертӳçи. Республика Пуçлăхĕ 1980 çулсенчех хута янă объекта вăхăта тăсмасăр тĕпрен юсама ыйтрĕ. Анатри Макаç çыннисем шкул автобусĕ валли ятарлă лаптăк уйăрса ăна асфальтпа çирĕплетессе кĕтнине пĕлтерчĕç.

ЧР Министрсен Кабинечĕн Председателĕ Иван Моторин социаллă пурнăçа лайăхлатмалли çул-йĕре тишкерсе тухрĕ, чăрмавсене пĕтерме пулăшас тĕллевпе район администрацине ырă сĕнӳ чылай пачĕ. Экономика министрĕ Владимир Аврелькин пурăнма кирлĕ чи пĕчĕк укçа виçинчен те сахалрах ĕç укçи тӳлекен предприятисене, суя эрех сутакансене ятран асăнчĕ, район бюджетне планланă чухне хăш-пĕр саманта тĕплĕн тишкерсе шута илме ыйтрĕ.

Канашлăва республика Пуçлăхĕ пĕтĕмлетрĕ, нумай ыйтăва хуравларĕ. Социаллă пурнăçпа экономика аталанăвĕнчи ӳсĕмлĕ кăтартусене палăртрĕ. Район умĕнчи йывăрлăхсене çĕнтерме ырă сунчĕ.

**Юрий МИХАЙЛОВ**

## Раççейре, тĕнчере

### Çар полицийĕ йĕркеленĕ

**Раççейре Хĕç-пăшаллă Вăйсен çар полицине туса хурасси çинчен калакан саккун вăя кĕнĕ. Тивĕçлĕ документа çак кунсенче Владимир Путин алă пусса çирĕплетнĕ.**

**Саккунпа килĕшӳллĕн çар полицейскийĕсем Раççей çарĕнче саккунлăха, право йĕркине, çар дисциплинине, çул-йĕр хăрушсăрлăхне, çар объекчĕсене сыхлассине тивĕçтерĕç, çавăн пекех преступлени тăвассипе кĕрешĕç. Çĕнĕ тытăма РФ оборона министрĕ ертсе пырĕ.**

**Çар полицийĕнче 6,5 пин çын пулмалла.**

### ГИТИС ректорĕ пулнăскер вилнĕ

**Раççей театр искусствин университечĕн /ГИТИС/ ректорĕ пулнă Марина Хмельницкая Мускавра нарăсăн 3-мĕшĕнче вилнĕ.**

**Марина Юрьевна Хмельницкая – Раççей искусствăсен тава тивĕçлĕ ĕçченĕ. Ĕçтешĕсем вăл лайăх преподаватель, специалист пулнине калаççĕ. Хмельницкая ГИТИС ректорĕн вырăнне 2000-2009 çулсенче йышăннă, ун хыççăн – преподаватель .**

**Lenta.ru**

## КУН хыççăн КУН

☎ 56-04-26

### «Ĕмĕртен ĕмĕре» – туслăх уявĕ

***Йĕпреçри этнографи музей комплексĕнче авалхи халăхсен юрри-кĕввин «Ĕмĕртен ĕмĕре» фестивалĕ иртнĕ. Ăна ирçе халăхне çутта кăларнă Макар Евсевьевич Евсевьев çуралнăранпа 150 çул çитнине халалланă. Унта Чăваш Енри тата Мордва Республикинчи чи лайăх пултарулăх ушкăнĕсем хутшăннă.***

Аваллăх управçин фойинче ЧР тава тивĕçлĕ художникĕн Виктор Немцевăн ĕçĕсен куравне йĕркеленĕ. Культура уявне килнĕ пысăк хăнасене «Эревет» фольклор ушкăнĕ юрă-ташăпа кĕтсе илнĕ. Фестивале ЧР культура министрĕ Вадим Ефимов, Мордва Республикин наци политикин министрĕ Анатолий Чушкин, Мордва Республикин культура тата туризм министрĕн çумĕ Николай Храмов тата ыттисем хутшăннă. «Макар Евсевьевич – кӳршĕллĕ пурăнакан икĕ халăха, чăваша тата ирçене, çыхăнтаракан кĕпер. Çак фестиваль чăваш, ирçе, тутар культурисене пĕрлештерекен паллă»,– тенĕ Вадим Петрович. Мордва Республикин наци политикин министрĕ Анатолий Чушкин Чăваш Республикинчи ирçе культурин центрĕн председательне Владимир Седойкина нацисен хушшинчи килĕшĕвĕн юбилейлĕ медалĕпе чысланă.

Уявра Мордва Республикин «Умарина» юрă-ташă ансамблĕ, Йĕпреç тăрăхĕнчи фольклор ушкăнĕсем хăйсен пултарулăхĕпе савăнтарнă.

**Р.ИВАНОВА.**

● *Тема тăсăмĕ – 4 стр.*

### Кĕнекепе – спорт тĕнчине

***Сочире пуçланакан Олимп вăййисене халалласа Чăваш Ен библиотекисенче вулав акцийĕ иртнĕ.***

Республикăри ачасемпе çамрăксен библиотекин ĕçченĕсем зарядкăран пуçланă. «Спорт – пурин валли те» спорт литературин лапамĕ уçăлни – чи пĕлтерĕшлĕ пулăм. Виçĕ пайлă экспозици вулакансене спорт тата Олимпиада кунçулне çутатакан кăларăмсемпе паллаштарать. Çавăн пекех библиотекăра пĕтĕм тĕнче ăмăртăвне халалласа «Кĕнекепе – спортпа сывлăх тĕнчине» курав хатĕрленĕ. Кĕнекесен фестивалĕ те чылай хăна пухнă. Унта çамрăк спортсменсем, волонтерсем, пултаруллă студентсем, паллă çыравçăсем хутшăннă. Вĕсем сывă пурнăç йĕркин тата спортпа туслашнин пĕлтерĕшĕ çинчен каланă, пурне те йĕлтĕр-коньки çине тăма, бассейна çӳреме чĕннĕ. Уяв ташă флэшмобĕпе вĕçленнĕ.

**О.МАСЛОВ.**

### Чăваш апачĕ хатĕрлер-и?

***«Чун çимĕçне» пысăка хуракансем 2008 çулта тухнă «Чăваш кухни» кĕнекене хăйне евĕр, паха тесе хакланă. Халĕ вара Чăваш кĕнеке издательствинче ĕçлекенсем ăна иккĕмĕш пурнăç «парнеленĕ».***

«Чăваш апат-çимĕçĕ» кĕнекере чăваш апат-çимĕçĕн рецепчĕсемпе кăна мар, кӳршĕллĕ халăхсенчен куçнисен вăрттăнлăхĕпе те паллашма май пур.

«Сивĕ апат», «Яшка», «Аш-какайран янтăланă апат», «Пулăран хатĕрленĕ апат», «Çăнăхпа кĕрперен пĕçернĕ çиме», «Çăмартапа сĕтрен хатĕрленĕ апат» сыпăксем чăваш кухнин пуянлăхне туллин уçса параççĕ. Çавăн пекех кунта хуплу, шăрттан, какай шӳрпи (сурăх какайĕнчен), хуран кукли, пулă яшки, çăмарта пăтти тата ытти те пĕçерме вĕренме пулать. Кулленхи çиме те кăмăла килĕ вулакана. Кĕнекене чăваш халăхĕн анлă сарăлнă апачĕн сăн ӳкерчĕкĕсемпе пуянлатнă.

**А.ГРОМОВА.**

### Виç таджикăн пĕр шухăш

***Муркаш районĕн прокуратури Таджикистан Республикин виçĕ гражданинĕ тĕлĕшпе пуçарнă уголовлă ĕçпе айăплав пĕтĕмлетĕвне çирĕплетсе суда тишкерме панă.***

25-29 çулсенчи Носиржон Холмтова, Абдуллажон Умматова тата Шерзод Худойбердиева суя укçапа усă курнăшăн айăплаççĕ. Следстви тĕпчесе пĕлтернĕ тăрăх – пĕлтĕрхи утă уйăхĕнче вĕсем тупса палăртман çынсенчен суя 5000 тенкĕлĕх 9 банкнот туяннă. Çурла уйăхĕнче Чăваш Енри автозаправка станцийĕсенчен пĕринче 300 тенкĕлĕх таваршăн хайхи суя укçапа тӳленĕ. Сутуçа 5000 тенкĕлĕх купюра парса каялла чăн укçа илнĕ. Кăштахран тепĕр АЗСра та çаплах хăтланма тăнă, анчах операторăн купюра чăнлăхĕ пирки иккĕленӳ çуралнă та кун пирки вăл çийĕнчех полицие евитленĕ. Пакунлисем ултавçăсен автомобильне вăл пĕлтернĕ номер тăрăх çул çинче чарнă. «Гастроль» çакăнпа вĕçленнĕ.

**Н.ДМИТРИЕВ.**

### Авари хыççăн авари

***Иртнĕ шăмат кун республикăри çулсем çинче пулнă аварисенче тăватă çын вилнĕ.***

12 сехет çурă тĕлнелле Красноармейски районĕнче, Çĕрпӳ-Красноармейски-Кӳлçырма çул çинче, хăрушă авари пулнă. «Фольксваген Пассат» автомобиль водителĕ машинăна пăхăнтарайман, çулăн сулахай енне тухса кайнă та хирĕç килекен ВАЗ-21310 автомобильпе çапăннă. Аварире иномаркăн 26 çулти водителĕ тата 27-ри пассажирĕ çавăнтах вилнĕ. ВАЗ водителĕ тата унпа пĕрле пулнă мăшăрĕ те йывăр суранланнă. Шел, хĕрарăма больницăна илсе çитерни пулин те çăлса хăварма май килмен – медучреждение тăна кĕреймесĕрех вăл та вилнĕ.

Каçхине вара Канаш районĕнче инкек пулнă. Асхва çынни, 32-ри арçын, 18 сехет те 20 минут тĕлнелле ВАЗ-21102 автомобильпе çулăн транспорт хирĕç килекен енне тухнă – йывăр фурăпа çапăннă. Çăмăл машинăран тимĕр-тăмăр купи кăна юлнă та – водитель, паллах, чĕрĕ юлма пултарайман.

**Н.КОНОВАЛОВ.**

### Çанталăк çинчен

Паян уяр çанталăк пулать. Çил çурçĕр-хĕвел тухăçĕнчен çеккунтра 2 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 16, каçхине 22 градус сивĕ.** Атмосфера пусăмĕ 758 мм, сывлăшри нӳрĕк 78 процент.

**Кун тăршшĕ 8 сехет те 53 минут.**

Ыран ăмăр çанталăк пулать. Çил кăнтăр-хĕвел тухăçĕнчен çеккунтра 2 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 19, каçхине 21 градус сивĕ.** Атмосфера пусăмĕ 759 мм, сывлăшри нӳрĕк 79 процент.

**Кун тăршшĕ 8 сехет те 57 минут.**

## МĔН КИРЛĔ? КĂТАРТУ ПАЛЛИ!

ПУБЛИЦИСТ ШУХĂШĔ



**Вывескăсемпе кăтартмăшсем – кăтарту паллисем – информацин анлă сарăлнă хатĕрĕ шутланаççĕ пулсассăн та, паян вĕсен пĕлтерĕшне çакна тĕпе хурса хаклани питех сисĕнмест. Массăллă информаци хатĕрĕсенче те ку шухăша палăртса çырнă ĕçсене тĕл пулман эпĕ. Мĕншĕн çапла пулса тухнин сăлтавне уçăмлăн татса паракан çук пирĕн хушăра. Кунашкал лару-тăрупа вара, тем тесессĕн те, килĕшмелле мар. Ара, çурт стени çинче унăн адресне çырни пулмасан эпир сĕм вăрманти пек чылайччен çухалса çӳренĕ, хамăра кирлĕ вăл е ку çурта, калăпăр, ял тăрăхĕн администрацийĕ е офисĕ ăçта вырнаçнине, кирлĕ урам ятне шыраса вăхăта нумай çухатнă пулăттăмăр.**

**Çакă паллă: ĕлĕкех çынсем вывескăсемпе кăтартмăшсем пурнăçра мĕнле вырăн йышăннине лайăх ăнланса илнĕ, анчах ун чухне вĕсем хут пĕлмен пирки çак ĕçре уйрăм паллăсемпе çеç усă курнă. Сăмахран: килтĕрĕшри, йăлари ĕç хатĕрĕсене юсакан ăста ăçта пурăннине – çăра уççи, сăрăпа суту-илӳ тăвакана çурт пĕрени е хапха çине ӳкернĕ пичке тăрăх пĕлсе тăнă.**

**Пирĕн çĕр-шывра кăтарту паллисем хăçан курăнма пуçланине халĕ те туллин тĕпчесе палăртайман-ха. Историксем çирĕплетнĕ тăрăх – çакă алă ĕçĕн ремесли анлăн сарăлма тытăннă, çынсем хăйсем ăсталанă япаласене сутасси вăй илме пуçланă тапхăрта кирлĕ пулнă. Предприятипе фирмăн, хуçалăхăн сăн-сăпатне /имиджне/ палăртас ĕçре кăтартмăшсем пысăк пĕлтерĕшлĕ. Йĕпреç районĕн тĕп архитекторĕ Маргарита Андреева палăртнă тăрăх – хăйĕн ятсумне çӳлерех çĕклессишĕн тăрăшакан хуçасем çапла тăваççĕ те. Вывескăсен, кăтарту паллисен хакне çӳпĕ вырăнне кăна хуракан пуçлăхсене чи малтан пырса тивет çапла çырни. Паян бизнес, коммерци тытăмĕ вăйлăн аталаннă тапхăрта ку ыйтăва кун йĕркинчех тытмалла.**

**Пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче кăтарту паллисем Совет влаçĕ вăхăтĕнче хресченсем йышпа ĕçлесе пурăнма тытăнсан вăй илни паллă. Демократи саманинче те кăтарту хатĕрĕсемсĕр май çук. Шел, паян ялта тавар туса кăларакансен хушшинче кун пирки «пуç ватакан» ытлах та сахал. Общестăшăн пĕлтерĕшлĕ шутланакан çурт-йĕре илемлетесси те кая юлса пырать. Хăнасен умĕнче пуçа чиксех намăсланма тивет хăш-пĕр пуçлăхăн: администраци çурчĕсем çинчи вывескăсем тахçанах тĕсĕсене çухатнине асăрхамаççĕ-çке. Уйрăм хуçалăхсенче вара вĕсене пачах курма çук. Тăратăн вара иккĕленсе: ку çуртра мĕн вырнаçнă-ши – хуçалăх правленийĕ-и е ял тăрăхĕн администрацийĕ-и?**

**Вывеска – кирек хăш организацишĕн те атрибут. Ун çинче организаци ятне, вăл ăçта вырнаçнине тата мĕнле кун йĕркипе ĕçленине çырса хуни пулмалла. Йĕпреç тăрăхĕнчи ял хуçалăх предприятийĕсенчен ытларахăшĕнче ку йĕркене пăхăнни нимĕн чухлĕ те сисĕнмест. Вак-тĕвек ыйту вырăнне хумалла мар çакна, хăйсен патне тĕрлĕ ĕçе татса пама килекен çынсене хисеплесси те чи малтан çавăнтанах пуçланнине асра тытмалла. Ертӳçĕн, тĕп специалистсен пӳлĕмĕсен алăкĕсем çинче вĕсен хушамачĕсемпе ячĕсене, ашшĕ ячĕсене, должноçĕсене тĕплĕн çырмалла. Ку енĕпе Йĕпреç тăрăхĕнчи «Красный партизан», «Путиловка», Киров ячĕллĕ, Ильич ячĕллĕ хуçалăхсен правленийĕсем кăтартуллă. Ыттисем /районта пĕтĕмпе 13 хуçалăх/ вырнаçнă çуртсене кĕнĕ çĕрте те, шаленче те кăтарту паллисене кăнтăрла хунарпа шырасан та кураймăн. Çырни пĕр Йĕпреç тăрăхне кăна пырса тивмест, ытти чылай районта та çак статьяра хускатнă лару-тăрăвах хуçаланнине асăрхама пулатех.**

**Кирек мĕнле предприяти те «тĕп штабран» – администраци çуртĕнчен пуçланать. Вăл ĕçпе пыракан çынсене кăмăллăн та тараватлăн кĕтсе илтĕр.**

**Геннадий КУЗНЕЦОВ**

*Канашлу*

# Çитĕнӳ хамăртан килет

**_Висĕм кун Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Етĕрне тăрăхĕнче пулчĕ. Малтанах аш-какай комбиначĕн ĕçĕпе паллашрĕ. 30 млн тенкĕ инвестици хывса комбинат пĕлтĕр пельмень, катлет хатĕрлекен цех хута янă, 5 хут нумайрах таса тупăш илнĕ._**



cap.ru сайчĕн сăн ӳкерчĕкĕ

– Туянакан çурма фабриката ытларах кăмăллать, вăхăта перекетлет, – терĕ Михаил Васильевич. – Экологи енчен таса çимĕç сывлăхшăн та усăллă.

Культура çуртĕнче «Етĕрне районĕн 2013 çулхи социаллă пурнăçĕпе экономика аталанăвĕ тата кăçалхи тĕллевĕсем» темăпа канашлу иртрĕ, район администрацийĕн пуçлăхĕ Владимир Кузьмин доклад турĕ.

Владимир Николаевич агропромышленноç комплексĕ аван ĕçленине палăртрĕ. Ял хуçалăхĕн тĕрлĕ тытăмри пĕрлешĕвĕсен продукци калăпăшĕн индексĕ 101,5 процентпа танлашнă. Кунти çĕр ĕçченĕсем çанталăк условийĕсене пăхмасăр пĕлтĕр тырă 2012 çулхинчен 19% нумайрах туса илнĕ, çĕр улмипе, пахча çимĕçпе те – республикăн вăтам кăтартăвĕнчен пысăкрах. Çур акине тухма вăрлăх çителĕклĕ, 64 процентне /республикăра – 48/ кондицие çитернĕ.

Выльăх-чĕрлĕх отраслĕ те ӳсĕмлĕ. Măйракаллă шултра выльăх йышне сыхласа хăварнă. Шел те, сысна кĕтĕвĕ чакнă. Ку продукци хăй хаклăхĕ пысăкланнипе çыхăннă. Йӳнĕ чухне тырă саппас хатĕрлеймен.

ЧР ял хуçалăх министрĕн çумĕ Эдуард Александров пĕлтернĕ тăрăх – республикăри чылай ял хуçалăх предприятийĕнче сысна ашĕ туса илесси тупăшлă, мĕншĕн тесен хăй хаклăх виçине кирлĕ шайра тытса пыма вĕренсе çитнĕ. Михаил Васильевич Етĕрнесене вĕсенчен тĕслĕх илсе сысна ĕрчетессине ăнăçлă аталантарма сĕнчĕ.

Доклада сӳтсе явма Михаил Игнатьевпа пĕрле ЧР экономика аталанăвĕн министрĕ Владимир Аврелькин, ял хуçалăх министрĕн çумĕ Эдуард Александров, ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕсем Николай Маловпа Валерий Павлов хутшăнчĕç. Вĕсем районăн социаллă пурнăçĕпе экономика аталанăвĕнче ырă тĕслĕхсемпе пĕрле çитменлĕх те пуррине палăртрĕç.

Пĕлтĕр ял ĕçченĕсен шалăвĕ – 22,3%, воспитательницăсен – 68,5%, педагогсен – 30,9%, культура ĕçченĕсен – 29,7%, çавăн пекех медиксен те самаях ӳснĕ пулин те вăл республикăри çак тытăмсенчи ĕç укçин вăтам кăтартăвне çитеймест. Кăçал та ку енĕпе çине тăрсах ĕçлемелле.

Кадр ыйтăвĕ çивĕч. Района 2012-2013 çулсенче «Земство тухтăрĕ» программăпа килĕшӳллĕн çамрăк 3 специалист ĕçе вырнаçнă, анчах çакă ыйту çивĕчлĕхне сиреймест. Пĕлтĕр тухтăрсен йышĕ 2012 çулхинчен 5,9% чакнă. 10 пин çын пуçне вăтамран – 17,4 врач /республикăра – 39/. Вăтам сыпăкри медперсонал та 6,5% сахалланнă. Сывлăх сыхлавĕн тытăмне медицина ĕçченĕ 29,9% çитмест.

Шкулсенче çамрăк педагог питĕ сахал. Вăтам ӳсĕм 47 çулпа танлашать. Диплом илекен специалистсене илĕртме тĕрлĕ мера йышăнма тивет. Вĕсене шалу çумне 3 çул 75% хушса тӳлеççĕ, 5 çул çулсерен 20-шер пин тенкĕ парса хавхалантарнă. Çурт-йĕр ыйтăвĕ шалуран та маларах тăрать. Республика Пуçлăхĕ район ертӳлĕхне кун пирки тĕплĕн шухăшласа пăхма сĕнчĕ.

Чи çивĕччи – демографи лару-тăрăвĕ. Кунта вăл Шăмăршăсенчен те вăйлăрах палăрать иккен. 2013 çулта Етĕрне районĕнче 380 ача çуралнă, 563 çын вилнĕ. Кашни 1000 çын пуçне вăтамран 6,4 çын /2012 çулта – 4,6/ чакнă. Çав вăхăтрах республикăра вăтам кăтарту пĕлтĕр вăтамран 0,8 çын хушăннине палăртать.

Арçынсем республика тулашĕнче нумай вăхăт ĕçлесе пурăнни çемьене тӳнтер витĕм кӳрет, чылай чухне пĕр-пĕрне шанманни, юлашкинчен уйрăласси патне илсе çитерет. 2013 çулта районта 232 çемье чăмăртаннă. Шел те, 102-шĕ уйрăлнă.

Медэкспертсем çирĕплетнĕ тăрăх – медицина этеме сывлăха лайăхлатма 10% çеç пулăшать иккен. Ыттишĕн çыннăн хăйĕн тăрăшмалла. «Çавăнпа та пĕр-пĕринпе кăмăллă, пархатарлă, сăпайлă пулмалла, сывă пурнăç йĕркине хăнăхмалла. Çавăн чухне çеç кăтартусем лайăхланĕç, вăл шутра – демографи енĕпе те», – пĕтĕмлетрĕ канашлăва Михаил Игнатьев.

■ **Валентин ГРИГОРЬЕВ**

*Чăвашстат хыпарлать*

# 2016 çулта – аграрисен çыравĕ

**_Росстат Пĕтĕм Раççей ял хуçалăхĕн 2016 çулхи çыравне хатĕрленсе ирттерес енĕпе 2014-2018 çулсенчи календарь мероприятийĕсен планне çирĕплетнĕ. Вĕсем нормативлă-право, финанс, меслетлĕх, организацилле мерăсен, кăтартусене тишкерессин, çырава пĕтĕмлетессин тата вĕсене официаллă майпа пичетлессин комплексĕпе тивĕçтерессипе çыхăннă._**

Раççей Федерацийĕн Правительствин 2013 çулхи ака уйăхĕн 10-мĕшĕнчи «Пĕтĕм Раççей ял хуçалăхĕн 2016 çулхи çыравне йĕркелесси çинчен» йышăнăвĕпе килĕшӳллĕн тивĕçлĕ мерăсем палăртнă.

Асăннă йышăнупах правительство РФ субъекчĕсен патшалăх влаçĕн органĕсене тата вырăнти хăй тытăмлăх органĕсене çырав ирттермешкĕн комиссисем йĕркелеме, çырав объекчĕсем пирки кăтартусем пухмашкăн граждансене хутшăнтарас енĕпе статистика службине пулăшма, администрацие территори тата муниципалитет йĕркелĕвĕсен, çавăн пекех географи объекчĕсен ячĕсене 2016 çулта улăштармасăр хăварма сĕннĕ.

Документпа килĕшӳллĕн ял хуçалăх çыравĕ 2016 çулхи утă уйăхĕн 1 – çурла уйăхĕн 15-мĕшĕсенче иртмелле, инçетре вырнаçнă тата çитме кансĕр территорисенче – авăн уйăхĕн 15 – чӳк уйăхĕн 15-мĕшĕсенче. Ăна пĕтĕмлетмелли тата официаллă майпа пичетлесе кăлармалли срок – 2018 çулхи тăваттăмĕш квартал.

Çакнашкал пысăк пĕлтерĕшлĕ çырав пирĕн çĕршывра юлашки хут 2006 çулта пулнă, вăл Раççейĕн тата Чăваш хутлăхĕн ял хуçалăхĕнчи лару-тăрăва туллин сăнланă, управленин никĕсленĕ йышăнăвĕсене çирĕплетмелли çăл куçĕ пулса тăнă.

■ **В.ИЛЬИНА**

*ЖКХ*

# Йĕркесĕрлĕх çав-çавах нумай

**_ЖКХри йĕркесĕрлĕх пирки паян кахал кăна калаçмасть пуль. Çĕр-шыв, республика ертӳсисем мерăсем йышăнма хистеççĕ, хăлăхсăррисене явап тыттараççĕ, анчах, шел те, ĕç-пуç тăруках лайăхланни сисĕнмест-ха. Çакна тĕп хулари лару-тăрăва тишкерсе Шупашкарти Ленин районĕн прокурорĕ Зелфинас КАРАМА та çирĕплетет._**

– Надзор тивĕçне пурнăçланă май пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх сферинче саккун требованийĕсене уяманни çав-çавах анлă сарăлнине куратпăр, – пăшăрханса палăртрĕ Зелфинас Миннетагирович. – Калăпăр, нумай хваттерлĕ çуртсене тытса тăракан организацисем пулăшу ĕçĕсемшĕн илмелли тӳлев виçине шутласа панă май йĕркене пăсниех мĕн чухлĕ!

Тĕслĕхсем пайтах. Сăмахран, Гагарин урамĕнчи 10-мĕш çуртра пурăнакан М. управлени килĕшĕвне урăх компанипе, «Стрелка-М» УКпа, тунă. Пулăшу ĕçĕсемшĕн тӳленĕ чухне вара укçана малтанхи УК, «Капремстрой», илнĕ. Пĕтĕмпе 8 пин тенкĕ ытла. Çавна май «Стрелка-М» умĕнче парăм капланнă. Хĕрарăм укçана çĕнĕ УКна куçарма ыйтса та çырнă, анчах управляющи компани ертӳсисем тивĕçлĕ мерăсем йышăнман. Саккуна пăсни куç кĕрет. Коммуналлă пулăшу ĕçĕсене пурнăçлаканăн чăннипе пурнăçланă ĕçсемшĕн кăна укçа илмелле.

Çакнашкал «йăнăшсене» «Деон» УКра та тупса палăртрăмăр. Унта та Я.-ран хайхи пулăшу ĕçĕсемшĕн тесе 8 пин тенкĕ ытла илнĕ, ĕçсене вара чăннипе «Инженер» УК пурнăçланă – кун пирки хваттерсен хуçисен пĕрлехи пухăвĕ йышăну тунă. «Богданка-Сервис» ОООра та çакнашкал тĕслĕхе тупса палăртрăмăр. Çурт-йĕр кодексĕпе килĕшӳллĕн нумай хваттерлĕ çуртра ăшă энергийĕ парса тăнăшăн илмелли тӳлеве çулталăкра пĕр хут кăна тӳрлетме юрать. Ятарлă правилăсенче иртнĕ çулталăкра хутса ăшăтнăшăн тӳлемелли пĕтĕмĕшле виçе текен ăнлав пур. Çапла вара, сăмахран, 2012 çулта тӳлев виçине 2011 çул пĕтĕмлетĕвĕ тăрăх кăна «тӳрлетме» юранă. 2009-2010 çулсемшĕн – юрамасть. Асăннă управляющи компанисенче çакна шута илмен. Вĕсен директорĕсен ячĕпе представлени çыртăмăр, çакăн хыççăн айăплисене явап тыттарнă, тӳлев виçисене çĕнĕрен шутласа панă.

Тепĕр нуша – потребительсене кӳнĕ коммуналлă пулăшу ĕçĕсен пахалăхĕ тивĕçтерменни. Калăпăр, пĕлтĕрхи кăрлачра Шупашкарти Короленко урамĕнчи 6-мĕш çурта пахалăхсăр вĕри шыв парса тăнине çирĕплетрĕмĕр. Явапли – «Богданка-Сервис» ООО. Шыв температури хăш-пĕр хваттерте 34-47 градус кăна пулнă. Нормăсемпе килĕшӳллĕн 60 градусран сивĕрех, 70 градусран вĕрирех пулмалла мар. «Ăшшине» парса çитерейменни «Стандарт» УКра та пулнă. Çавна май асăннă управляющи компанисен директорĕсен административлă майпа явап тытма тиврĕ – 500-шер тенкĕлĕх штраф тӳлерĕç.

Парăм пур тесе çынсене электричество парса тăрассине саккуна пăсса чарни те тĕл пулать. «Новоюжный», «Интех», «Инженер» йĕркене пăснă. Пĕр тĕслĕхре, сăмахран, Эгер бульварĕнчи 35-мĕш çуртри хваттерте пурăнакансене маларах асăрхаттармасăрах киловатсем пама пăрахнă. Апла хăтланма юрамасть. Куншăн управляющи компанисен ертӳçисем явап тытаççĕ.

Федерацин çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăха реформăлама пулăшмалли фончĕ çинчен калакан саккун çурт-йĕре çĕнетмешкĕн пулăшни куç кĕрет. Анчах фонд укçипе саккунлă усă курмалла. Ку енĕпе те çитменлĕхсем пур. Б.Хмельницкий урамĕнчи 113-мĕш çуртри хваттерсен хуçисем пуху ирттерсе çуртри пĕрлехи пурлăха тĕпрен юсамашкăн хăйсен укçине те хывма йышăннă – 15% чухлĕ. Çурт-йĕр кодексĕнче пӳлĕмсен мĕн пур хуçин обязательнăй йĕркепе укçа хывмаллине çирĕплетнĕ. Анчах «Богданка-Сервис» ООО, çак çурта пăхса тăраканскер, пĕр пӳлĕм хуçинчен укça илмен. Кунашкал «çăмăллăх» – саккунсăр, çакăншăн тивĕçлĕ представлени çыртăмăр.

Çак компани пуçлăхĕн ячĕпе тепĕр представлени те пулчĕ. Халăхран укçа пухмалли вăхăта хваттерсен хуçисен пухăвĕнче сӳтсе явмасăрах улăштарнă. Çакă та саккунпа килĕшсе тăмасть.

УКсем ресурссемпе тивĕçтеркен организацисене вăхăтра тӳлеменни хăшĕсемшĕн йăлана кĕнĕ теме те юрать. Çынсенчен ăшăшăн, вĕри шывшăн, электричествăшăн укçа пухаççĕ, анчах ресурссемпе тивĕçтерекенсене вăхăтра тата туллин тӳлемеççĕ. Е хваттерсен хуçисенчен çав организацисемпе татăлмашкăн парăмсене шыраса илес енĕпе мерăсем йышăнмаççĕ. Кунашкаллине «Коммунальщик», «Капремстрой», «Альфа», «Центр», «Реал-Люкс», «Жилкомсервис» УКсенче, ытти компанире тупса палăртрăмăр. Прокуратура тивĕçлĕ представленисем çырнă хыççăн çав управляющи компанисемпе ТСЖсем парăмсене шыраса илес енĕпе тинех мерăсем йышăнчĕç.

Тепĕр саманта палăртса хăварни вырăнлă. «Деон» УКра тĕрĕслев ирттернĕ май çак компани 2013 çулхи кăрлачçурла уйăхĕсенче усă курнă коммуналлă пулăшу ĕçĕсемшĕн халăха 15 млн тенкĕ ытла тӳлев шутласа пани палăрчĕ. Граждансем çак тапхăрта хывнă пĕтĕмĕшле виçе вара – 12 млн тенке яхăн. Çав шутран 2,1 млн ытларах тенке ресурссемпе тивĕçтерекен организацисене куçарса панă. Çакă – халăхран пухнă укçан 17,5% кăна. Акă мĕншĕн «Деонăн» ăшă энергийĕ, вĕри тата сивĕ шыв, электричество парса тăракан «Коммуналлă технологисем» ООО, «Чăваш энергосбыт компанийĕ», «Водоканал» АУОсен умĕнчи парăмĕ тăруках ӳссе кайнă: пĕлтĕрхи кăрлачăн 1-мĕшĕ тĕлне 3,5 млн тенке яхăн пулнă, сакăр уйăхран, авăн уйăхĕн 1-мĕшĕ тĕлне, 10,8 млн тенкĕ патне çывхарнă.

Ку енĕпе тивĕçлĕ требованисене пăхăнманнине «Мульти-Сервис», «Капремстрой», «Инженер», «Альфа», «Теплый дом», «Лапсарская» УКсенче те тăрă шыв çине кăлартăмăр. Вĕсен ертӳçисем яваплăхран пăрăнаймĕç. Прокуратура тĕрĕслевĕсен материалĕсене тĕпе хурса управляющи компанисем финанспа хуçалăх ĕçхĕлне пурнăçланă май саккун требованийĕсене уяманшăн «Жилкомсервис» тата «Деон» УК» ОООсен пуçлăхĕсем тĕлĕшпе ШĔМĕн следстви управленийĕ уголовлă ĕçсем те пуçарчĕ. Уголовлă кодексăн 201 статйин 1-мĕш пайĕпе – укçана килĕшӳсенче палăртнă пулăшу ĕçĕсемпе çыхăнман тĕллевсемпе тăкакласа пĕтернĕшĕн. Çавăн пекех пĕлтĕр «Деон» ООО учредителĕ тĕлĕшпе УК 159 статйин 3-мĕш пайĕпе уголовлă ĕç пуçарнă, «Коммунальщик» ООО директорĕ тĕлĕшпе – 160 статьян 4-мĕш пайĕпе.

Пĕтĕмпе вара иртнĕ çул нумай хваттерлĕ çуртсене тытса тăракан организацисен ĕçхĕлĕнчи саккуна пăснă тĕслĕхсемпе район прокуратури 168 представлени çырнă, айăплă 157 çынна – дисциплина енĕпе, 28 çынна – административлă майпа явап тыттарнă. Çĕр-шыв, республика ертӳçисем ЖКХ сферинче йĕрке тума хистенипе кăна мар, çакă граждансен хăтлăхне тивĕçтерме кирлине кура çирĕп тĕрĕслев пулмалла. Çавна май прокуратура ку ыйтусене малашне те куçран вĕçертмĕ.

■ **Николай КОНОВАЛОВ**
**ыйтса пĕлнĕ**

*Ыйту-хурав*

# Ĕç кунĕ кĕскерех

**Саккунпа килĕшӳллĕн – уяв умĕнхи ĕç кунĕ ытти чухнехинчен пĕр сехет кĕскерех. Енчен те çын 0,5 е 0,25 ставкăпа вăй хурать тăк унăн ĕç кунĕ мĕн чухлĕ кĕскелет?**

**Ксения А.**
Етĕрне хули.

РФ Ĕçлев кодексĕн 95 статйипе килĕшӳллĕн уяв умĕнхи ĕç кунĕ е смени пĕр сехет кĕскелет. Ку йĕрке пĕтĕм ĕçчене пырса тивет.

Пĕр чарăнмасăр ĕçлекен организацисенче тата ĕçсен хăшпĕр тĕсĕнче – вĕсенче смена вăхăтне чакарма май çук – уяв умĕнхи кун палăртнинчен ытларах вăй хунă çынна канмашкăн хушма сехетсем памалла е вăл хăй килĕшсен ятарлă нормăна тĕпе хурса хушса тӳлемелле. РФ Аслă Сучĕн 2006 çулхи авăн уйăхĕн 29-мĕшĕнчи ГКПИ 06-963 №-лĕ йышăнăвĕпе килĕшӳллĕн ку çăмăллăх пĕтĕм ĕçчене пырса тивет, çав шутра кĕскетнĕ ĕç кунĕпе тăрăшакансене те: 18 çула çитменнисене, 1 тата 2 ушкăн инваличĕсене, сиенлĕ тата хăрушлăхлă условисемлĕ вырăнсенче тар тăкакансене те. Ку йышăнăва пĕтĕм пуçлăх-ертӳçĕн асра тытмалла. Çак правило харăсах икĕ çĕрте ĕçлекенсене те пырса тивет. Ку категорие РФ Ĕçлев кодексĕн 287 статйинче палăртнă пĕтĕм гарантипе туллин тивĕçтермелле.

*Сывлăх*

# Тухтăрпа пĕрле уçăлса çӳрерĕç



**_Нарăс уйăхĕн 1-мĕшĕнче Шупашкар кӳлмекĕн хĕррине сывă пурнăç йĕркине пуçаруллă пăхăнакансем – ЧР Сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министерствин, сиплев тата социаллă тытăм ĕçченĕсем, хăйсен сывлăхне хаклакансем пухăнчĕç. Сывлăш температури 20 градус сиввине пăхмасăр вĕсем кун пек чухне те организма пиçĕхтерме май пуррине ĕнентерме пултарчĕç._**

"Тухтăрпа пĕрле уçăлса çӳрени" сиплевпе профилактика акцийĕ ЧР Правительство çурчĕ умĕнче 9 сехетре старт илчĕ. Алла Самойлова министр пухăннисене саламланă май Олимп вăййисем вăхăтĕнче асăннă мероприятие тăтăшах ирттермеллине палăртрĕ, "Чи пĕлтерĕшли – уçă сывлăшра утса çӳрессине хăвăр та йăлана кĕртетĕр акă", – терĕ вăл.

Сивĕрен хăраман хастарсем унран хӳтĕленесси пирки сиплев учрежденийĕсен ертӳçисен сĕнĕвĕ-канашне ăша хыврĕç.

Васкавлă медицина пулăшăвĕн больницин тĕп врачĕ Евгений Орешников кун пек чухне ăшăрах тумланмаллине, черчен ӳтлисене хӳтлĕх кремĕ сĕрмеллине аса илтерчĕ. Хулан 1-мĕш клиника больницин ертӳçи Лидия Воропаева уçăлмашкăн выçăлла тухмалла марри пирки асăрхаттарчĕ. 3-мĕш ача-пăча больницин тĕп тухтăрĕ Андрей Малов ашшĕ-амăшне ачасен ӳтне сĕрмешкĕн ятарлă кремпа усă курма сĕнчĕ, унăн шухăшĕпе – кăкăр ачисене кун пек чухне уçăлма илсе тухмашкăн тăхтамалла, пĕчĕккисен тумĕшĕн ытларах тăрăшмалла, вĕсене çунашка çинче хускалмасăр лартса пынин усси çуккине пĕлтерчĕ.

Тухтăрсем палăртнă тăрăх – сивĕ çанталăкра та чун киленĕçĕ тупакан çынсем йышлансах пыраççĕ. Апла тăк вĕсем хăйсен сывлăхне мĕнле çирĕплетмеллине аван чухлаççĕ.

Асăннă акци тĕллевĕ – Чăваш хутлăхĕн çыннисене уçăлса çӳресе хăйсен сывлăхне тĕреклетме хăнăхтарасси, ку енĕпе пĕлĕвне ӳстересси, пуçаруллă канăва тата сывă пурнăç йĕркине пăхăннин пĕлтерĕшне ăнлантарасси.

Тухтăрпа пĕрле уçăлса çӳресси йăлана кĕнĕ ĕнтĕ: ЧР Сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министерствин ертӳлĕхĕ пуçарнипе асăннă акци нарăс уйăхĕн кашни шăмат кунĕнче иртмелле. Çакна валли çĕкленӳллĕ кăмăл-туйăм, чун хавалĕ тата меллĕ тумпа юрăхлă атă-пушмак кăна кирлĕ. Хăйсен сывлăхĕшĕн тăрăшакансене нарăс уйăхĕн 8-мĕшĕнче 9 сехетре Правительство çурчĕ çывăхĕнчи фонтан умĕнче /Президент бульварĕ, 17-мĕш çурт/ кĕтеççĕ.

■ **В.СМИРНОВА**

# Суд приставĕсен пайĕсене пĕрлештернĕ

**_Службăн Раççей шайĕнчи йĕркелӳпе штат мероприятийĕсемпе килĕшӳллĕн Федерацин суд приставĕсен службин республикăри управленийĕ хăйĕн тытăмне улăштарнă._**

Нарăсăн 1-мĕшĕнчен Патăрьел тата Шăмăршă районĕсенчи суд приставĕсен пайĕсене пĕрлештернĕ – управленин Патăрьел тата Шăмăршă районĕсенчи пайĕ пулса тăнă, центрĕ – Патăрьелĕнче. Ăна Галина Афки ертсе пырĕ. Çĕмĕрле тата Пăрачкав районĕсенчи пайсем те пĕр тытăмра пулаççĕ. Пай центрĕ Çĕмĕрлере вырнаçнă, пуçлăхĕ – Алексей Бутузов.

**К.НИКОЛАЕВ.**

*Патшалăх пулăшăвĕ*

# Социаллă пособисене ӳстернĕ

**_РФ социаллă страховани фончĕн регион уйрăмĕ пĕлтернĕ тăрăх – ĕçлекен граждансене асăннă фонд шучĕпе тӳлекен пособисене 2014 çулхи кăрлач уйăхĕн 1-мĕшĕнчен 1,05 коэффициент индексациленĕ._**

Ачаллă граждансене паракан патшалăх пособийĕсен виçисем çакăн чухлĕ пулаççĕ:

- çие юлнă хĕрарăмсем медицина учрежденийĕнче малтанхи тапхăртах учета тăрсан паракан пĕр хут тӳлекен пособи – 515,33 тенкĕ;
- ача çуралсан пĕр хут тӳлекен пособи – 13741,99 тенкĕ /енчен те вăл çут тĕнчене 2014 çулхи кăрлачăн 1-мĕшĕнче е ун хыççăн килсен/;
- пĕрремĕш ачана пăхнăшăн уйăхсерен паракан пособин чи пĕчĕк виçи – 2576,63 тенкĕ;
- иккĕмĕш е ун хыççăнхи ачана пăхнăшăн тивĕçекенни – 5153,24 тенкĕ.

Аса илтеретпĕр: ача пăхмашкăн уйăхсерен паракан пособи виçине вăтам шалăвăн 40 процентне тĕпе хурса шутланă тăк саккун тăрăх индексаци коэффициенчĕпе усă курма йышăнман.

2014 çулта вăй илнĕ страховани тĕслĕхĕсем тăрăх ача çуратас умĕнхи, çуратнă хыççăнхи, ăна пăхнăшăн уйăхсерен паракан пособисене шутланă чухне тĕпе хуракан кулленхи вăтам ĕç укçин чи пысăк виçи 1479,45 тенкĕпе танлашать. Ачана çулталăк çурăна çитиччен пăхнăшăн уйăхсерен тӳлекен пособин чи пысăк виçи страхланă çыннăн вăтам ĕç укçин 40 процентне тĕпе хурса шутланă чухне 17990,11 тенкĕ пулать.

Ача-пăча пособийĕсемсĕр пуçне пурнăçран уйрăлнă çынна юлашки çула ăсатмашкăн уйăракан тӳлеве те индексациленĕ. Унăн база виçине 5002,16 тенке çитернĕ.

2014 çулхи кăрлачăн 1-мĕшĕнче çавăн пекех РФ Правительствин 2013 çулхи раштав уйăхĕн 18-мĕшĕнчи 1179-мĕш йышăнăвне пурнăçласа производствăри инкек-синкекрен тата професси чирчĕрĕнчен обязательнăй майпа социаллă страховани тунăшăн уйăхсерен тивĕçекен тӳлевсен индексаци коэффициентне 1,05 виçепе çирĕплетнĕ.

*Инкек-синкек*

# Судья приговорĕ паллă

**_Шупашкарти Ленин районĕн сучĕ ЧР Аслă сучĕн отставкăри судйи Андрей Емельянов тĕлĕшпе пуçарнă уголовлă ĕçе тишкерсе пĕтернĕ, айăплав палăртнă._**

Сăмах 2011 çулхи раштавăн 6-мĕшĕнче пулнă инкек пирки. Следстви палăртнă тăрăх – Шупашкарти Коммуналлă слободари унккăçул патĕнче Емельянов руль умĕнче пулнă май çанталăк условийĕсене, транспорт юхăмне шута илмен, çуран çынсем çул урлă каçмалли вырăн патне çывхарнă май машина хăвăртлăхне чакарман. Çавна май «зебра» çывăхĕнче çул урлă каçма тăнă 34 çулти хĕрарăма таптанă, вилмеллех суран кӳнĕ.

Водитель вырăнтан пăрахса кайман, тĕрĕслев вăл урă пулнине палăртнă. Республика прокуратурин пресс-служби пĕлтернĕ тăрăх – судра Емельянов хăйĕн айăпне йышăнман, çакна унăн машинăна чарма, çынна таптассине сирсе яма май пулманнипе сăлтавланă. Апла пулин те вăл пурнăçран уйрăлнă хĕрарăмăн тăванĕсене сиене саплаштарса хăйĕн ирĕкĕпе 610 пин тенкĕ тӳленĕ. Айăпа çемçетекен самантсене шута илсе суд ăна 2 çуллăха условнăй майпа ирĕклĕхсĕр, çавăн пекех 2 çуллăха транспорт хатĕрĕпе çӳремелли правасăр хăварнă. Приговор вăя кĕмен-ха.

■ **Н.ДМИТРИЕВ**

*Пĕлме интереслĕ*

# Хуçа – хĕрарăм!

**_Арçын пирки кил хуçи теме хăнăхнă, мăшăрĕ – кил хуçи хĕрарăмĕ. Тĕрĕссипе вара урăхларах иккен, ку чăнлăхпа килĕшсех тăмасть. Ытларах чухне хуçа – хĕрарăм. Çакна Росреестрăн республикăри управленийĕн пĕтĕмлетĕвĕ те çирĕплетет._**

Чăваш Енре куçми пурлăх прависене ытларах хĕрарăмсем çине регистрациленĕ. Этемлĕхĕн ачаш пайĕн харпăрлăхĕнче – 615,6 пин ытла хваттер, çурт, пӳлĕм, çĕр лаптăкĕн тата куçми ытти пурлăх прави. Арçынсем çавнашкал 575 пин ытларах объектпа хуçаланаççĕ.

Шупашкарта çак уйрăмлăх пушшех кăтартуллă: хĕрарăмсен харпăрлăхĕнче – 208,4 пин ытла объект, арçынсен – 16,1 пин ытла. Тепĕр тесен Куславкка, Хĕрлĕ Чутай, Пăрачкав районĕсенче те хĕрарăм хуçа чылай ытларах.

Росреестр пĕтĕмлетĕвĕнчен çакă та паллă: 961 пин ытла объект прависем 30 çултан аслăрах çынсен аллинче. Чăн та, пуян çамрăксем те пур – 18 çултан аслăраххисем куçми пурлăхăн 118 пин ытла объекчĕпе хуçаланаççĕ.

Çакна та палăртмалла: çул çитмен ачасем çине çыртарнă объектсем те çуллен нумайланаççĕ. Паян ашшĕ-амăшĕ хăйсен хваттерĕсен е çурчĕсен пайĕсене тӳрех ачисен ячĕпе регистрацилеме тăрăшать. Çакна саккун та витĕм кӳрет ĕнтĕ: калăпăр, куçми пурлăх туяннă чух амăшĕн капиталĕпе усă курнă тăк – пепкене пая кĕртмеллех. Çавна май паян Чăваш Енре 110 пин ытла правăна ачасем çине регистрациленĕ.

Асăрхаттарни вырăнлă: çак статистика объектсен е куçми пурлăхпа хуçаланакан хĕрарăмсемпе арçынсен шутне мар, шăпах харпăрлăх прависен шутне палăртать. Пĕр хваттер тĕлĕшпех çемьери кашни çын правине çирĕплетме пултараççĕ-çке. Е – пĕр çыннăнах, тĕслĕхрен, амăшĕн хваттерĕнче, ашшĕн гаражĕнче тата хăйĕн коттеджĕнче харпăрлăх прави пулма пултарать.

■ **К.АНТОНОВ**

# Хěр-упраçпа Яш-кěрěм

*Ятарлă кăларăм*

*Ырă тěслěх*

## Пиччěшě те, шăллě те – стипендиатсем

***Чăваш Енре хастар та мал ěмěтлě хěр-упраçпа яш-кěрěме тěрлě енлěн хавхалантарма тăрăшаççě. 2004 çултанпа çамрăксене пултарулăхри ăнтăлушăн Чăваш Республикин Пуçлăхěн стипендине параççě. 2013 çул пěтěмлетěвěсемпе стипендиатсен йышне кěнисенчен 60% – вěренекенсем, 8% – общество пěрлешěвěсен хастарěсем, 32% – промышленноç, ял хуçалăх, культура тата ытти сферăри специалистсем. Вěсем уйăхсерен 1830 тенкě илсе тăрěç. Пысăк çак чыса Елчěк районěнчи 13 çамрăк тивěçнě. Вěсен йышěнче пěр тăвансем – Аслă Елчěкри Ильяпа Денис Черновсем.***



### Кěрешет, хоккейла вылять

Илья Г.Н.Волков ячěллě пěтěмěшле пěлӳ паракан вăтам шкулта 11-мěш класра вěренет. Унăн сăн ӳкерчěкě – Хисеп хăми çинче. Вăл шкулти мероприятисене хастар хутшăнать. Класс ертӳçи Надежда Хушкина каланă тăрăх – 5-8-мěш классенче вěреннě вăхăтра Илья Тимур командин ертӳçи пулнă, хăйěн ушкăнěпе ватă çынсене тăтăшах пулăшнă. Каччă аслă ăру çыннисене халě те хисеплет, урамра курсан сывлăх сунмасăр иртмест. Çакăншăн ăна пурте хисеплеççě, юратаççě. Хальхи вăхăтра И.Чернов шкулти "Сенкер вěçен кайăк" организаци членě.

11-мěш класс вěренекенě спортпа питě туслă, район, республика, Раççей шайěнчи ăмăртусене хутшăнса час-часах малти вырăнсене йышăнать. Илья – пиçиххи çыхса кěрешес енěпе Раççей спорт мастерě. Унăн çавăн пекех ирěклě мелпе кěрешессипе те разряд пур. Хоккей енěпе республикăра пěрре мар чемпион ятне çěнсе илнě. Юлташěсем вăл лайăх вратарь пулнине палăртаççě. Илья çавăн пекех футболла, баскетболла выляма юратать. "Илюш пěчěкрех чухне тăтăшах чирлетчě, час-часах больницăра выртатчě. Çакăншăн хам та пăшăрханаттăмччě. Сывлăхě лайăхланмěши тесе эпир ăна спортпа туслашма сěнтěмěр. Чăн та, Илья Уркин ячěллě спорт шкулне çӳреме тытăнсан вăл спорт ăмăртăвěсене хутшăнма, çитěнӳ хыççăн çитěнӳ тума пуçларě. Хăйěнчен çирěп ыйтни, çине тăма пěлни, учительсем мěн хушнине яланах тӳрě кăмăлпа пурнăçлани, ěçченлěхě те ӳсěмсем тума пулăшаççě ăна. Илья пирěн шкулта ăс пухакансене ырă тěслěх кăтартать. Кěçěн классенче ăс пухакансем чěнсен вăл вěсемпе калаçусем ирттерет, сывă пурнăç йěркине тытса пыни хăйсемшěнех усăллă иккенне ăнлантарать," – каласа кăтартать класс ертӳçи Надежда Хушкина. "Спорт манăн сывлăха çирěплетме пулăшрě. Унсăр пуçне вăл чăтăмлăха, кěлетке пиçěлěхне ӳстерет. Ăмăртусенче паллă çынсене курни, çěнě тус-юлташ тупни хавхалантарать", – чунне уçать Георгий Адюков тренер патěнче ăсталăхне туптакан çамрăк.

Унăн награда чылай. 1-мěш вырăншăн панă медальсене ятарласа шутларăмăр та – 33 штук пулчě. Унсăр пуçне 2 тата 3-мěш вырăнсемшěн тивěçнисем, кубоксем, Тав хучěсем... Кăçал Илья хăйне чěнекен пěтěм ăмăртăва хутшăнасшăнах мар, пысăк пěлтерěшлисенче çеç вăй виçесшěн. 11-мěш класс вěренекенěн Патшалăхăн пěрлехи экзаменěсене хатěрленмелле-çке. И.Чернов ППЭ йěркеллех тытсан çар училищине вěренме каясшăн. Чăваш Ен Пуçлăхěн стипендиачěсен йышне лекнěшěн чăнласах та савăнать вăл, укçине вара тăкаклассшăн мар. Вěренме кěрсен çав нухрат вырăнлăрах пулě.

### "Ял пурнăçě килěшет"

Унăн пиччěшě Денис – Ленин ячěллě ЯХПКра оператор. Выльăх-чěрлěхе юрататать вăл. Пăру пăхакан амăшě ăна пěчěклех хăйпе пěрле фермăна илсе килсе кăтартнă. Килте выльăх усрани те професси суйлавне витěм кӳнě паллах. Чăн та, шкул пěтерсенех ял хуçалăх тытăмне вырнаçман вăл, юлташěсемпе пěрле Мускава çӳренě. "Малтанхи виçě çул килěшетчě, каярахпа йěркеллě тӳлеми пулчěç те тěп хулана текех каяс темерěм. Вырăнти хуçалăхра ěçлеме пуçларăм. Кунти условисем килěшеççě, шалу та вăхăтра параççě", – пěлтерет Денис. Хуçалăх ертӳçисем ăна хушнине тěплěн пурнăçланăшăн, ӳркенменшěн мухтаççě. Унсăр пуçне каччă хăй вăхăтěнче ěне сăвакан операторсен хушшинче йěркеленě конкурсра малти вырăнсенчен пěрне йышăннă.

Денис хăйěн пушă вăхăт çукпа пěрех тесе çирěплетет. Çуркунне ял çыннишěн канăçсăр тапхăр пуçланать те – çитěнтернě пахча çимěçе пуçтарса кěртмесěр те вěçленмест вăл. Д.Чернов ěç хыççăн ялти фермер патěнче пилěк авма та ěлкěрет. Çав хушăра, паллах, килти пахчара тăрмашма та ерçӳ тупать. Ял хуçалăхне килěштерекен йěкěт хальлěхе ашшě-амăшěпе тата шăллěпе Ильяпа пурăнать. Кăçал кěр енне уйрăлса тухма ěмěтленет. Çурчě пур ěнтě, ăна ашшěн аппăшě парнеленě. Яш çулла ку пӳртěн никěсне çирěплетесшěн, тăррине улăштарасшăн, ун çумне тěксе çурт тăвасшăн. Каярахпа хуралтăсем хăпартасшăн. Унтан вара выльăх-чěрлěх ěрчетме тытăнасшăн: лаша /ăна вăл питě юрататать/ тата вăкăр усрасшăн. Строительство ěçěсене пуçăнсан стипенди укçи шăпах вырăнлă пулě. Унччен çав кěмěле тытасшăн мар, пухса пырасшăн. "Тěрěссипе, стипендиатсен йышěнче пулатăп тесе шухăшламанччě. Пěлěшсем те: "Пěр çемьерен икě çынна стипенди парěç-ши?" – тенěрен пушшех пăшăрхантăм. Ку чыса тивěçнине пěлсен вара савăнтăм. Çакнашкал пулăшу чăнласах та хавхалантарать", – хěпěртевне пытармасть çамрăк.

Лаша çулталăкě Денисшăн нумайлăха асра юлě, мěншěн тесен вăл кăçал авланасшăн. Савнийěпе калаçса татăлнă ěнтě. "Мăшăру хулана илсе каяс тесен килěшěн-и?" – тесен акă мěн хуравларě Д.Чернов: "Çук, хулана каймастпăр. Пире ял пурнăçě ытларах килěшет". Чун çунтармăш чиперкке Чăваш патшалăх ял хуçалăх академийěнче юлашки курсра вěренет. Зоотехник специальноçне алла илекенскер ялта пурăнма хирěç мар, хăйěн профессийěпех ěçе вырнаçасшăн. Ял хуçалăхне кăмăллакан çамрăксене телей сунмалли çеç юлать.

■ **Ирина КЛЕМЕНТЬЕВА.**

Сăн ӳкерчěкěсем авторăн тата çемье архивěнчен



## Пур енěпе те маттур



***Канаш районěнчи Виктория Николаева малтан Ухман, 6-мěш класранпа вара Вăтакас Кипеч шкулěсенче вěреннě. С.Федорова учитель хавхалантарнăран акăлчан чěлхине килěштерме пуçланă. Викăн Светлана Михайловна пек пулас килнě.***

Шăпах вăл панă ырă сěнӳ-канаша тěпе хурса тата ачасене юратнăран вěрентекен профессине алла илес ěмěт çуралнă. 9 класс пěтерсен В.Николаева Канашри педагогика колледжěн алăкне уçса кěнě, экзаменсене ăнăçлă тытса студентсен йышне лекнě. Пике хальхи вăхăтра "пиллěк" паллăсемпе çеç вěренет. Колледжра йěркелекен мероприятисене хастар хутшăнать. Эрнере пěр куна Мăкăрти пуçламăш шкулта ирттерет. Унта вăл ачасене акăлчан чěлхин вăрттăнлăхěсене "шěкěлчеме" хăнăхтарать.

Вика пушă вăхăтра вěтě шăрçапа тěрлеме юратать. Килти кухньăна унăн "Хěрлě мăкăнь" тата "Вазăри утмăл турат" ал ěçěсем илем кӳреççě. Пěр тěрлеме пуçласан ěçе вěçлемесěр те чарăнмасть. Аппăшěн хěрě Василиса валли мěн чухлě тетте ăсталаман-ши вăл? Паллах, пурне те вěтě шăрçапа тěрлесе илемлетнě.

Виктория Николаевăна вěренӳре, пултарулăхра пысăк çитěнӳсем тунăшăн кăçал Чăваш Ен Пуçлăхěн стипендине пама йышăннă. 2014 çулта хěр колледжăн шкул уйрăмěнчен вěренсе тухě, пуçламăш классен учителěн дипломне илě. Çакăн хыççăн вăл пěлěвне аслă шкулта ӳстересшěн.

■ **Виталий АЧЧА.**

Автор сăн ӳкерчěкě

*Кун кěнекинчен*

## Телей юнашарах

"Манăн пулас кинěм мěнле пурăнать?" – кашни курмассерен çапла ыйтса вăтантаратчě мана санăн аннӳ. Эпě, шкулта вěренекенскер, именнипе нимěн каламасăрах иртсе кайма тăрăшаттăм. "Эпир Таиçпе пěр ялтан, çавăнпа вăрçтарать ěнтě вăл сана. Хăтатăхлачăллă пуласчě-ха тесе хама та пěрре мар систернě. Халě ěлěкхи мар: ачисем валли ашшě-амăшě мăшăр суйламасть", – лăплантаратчě мана аннем.

Аннӳ тăтăшах шӳтленěрен ачасем те пире: "Тили-тили теста, жених и невеста", – тесе витлетчěç. Эх, тарăхаттăм çакна илтсен, сана та кӳренеттěм: мěншěн-ха эсě юлташусене ку тěрěс мар тесе ăнлантармастăн? "Карма çăварсене" пула санран тарса çӳреме тытăнтăм. Эсě вара мана хăвăн пулас арăму вырăннех хураттăн ахăртнех: кашни çулах эпě йышăннă парта хушшине ларattăн, уроксенче пулăшу ыйтаттăн. Тарăхнăран пěр сăмах та чěнместěмччě вěт. Аслăрах классенче ташă каçěсенче манран хăпмастăн. Вальс кěвви илтěнсенех хěрсен хыçне пытанма васкаттăм. Пур пěрех шыраса тупаттăн мана, ташлама илсе тухаттăн.

Пěррехинче, ун чухне 9-мěш класра ăс пухаттăмăрччě, урока килмерěн. Юлташу эсě чирленине пěлтерчě. Операци тунă-мěн сана, çавăнпа больницăра выртатăн. Пěр енчен, сана шеллерěм, тепěр енчен вара хама "йěрлекен" çукран савăнтăм. Анчах çак "ирěклěхпе" пěр кун çеç килентěм, иккěмěш кунхине... тунсăхлама тытăнтăм. "Эпě ăна хěрхенетěп çеç", – улталама тăрăшрăм хама, анчах чěрене суяймăн çав. Ун чухне тин хам та сана килěштернине ăнлантăм. Сыватмăша çитсе килес шухăш та пурччě, анчах хěр каччă патне çӳрени килěшӳллě мар тесе район центрне каймарăм. Виçě эрнерен тин шкула килтěн. Эсě ыйтнипе экзаменсене пěрлех хатěрлентěмěр. Çак тапхăрта пěрпěрне тата лайăхрах пěлме пуçларăмăр. Эсě ырă кăмăллă та ěçчен, умна лартнă тěллевсене пурнăçа кěртме ăнтăлакан çын иккен. "Манăн турă çырни мар-ши вăл?" – пуçăмра çакăн пек шухăш та çуралчě.

Патшалăхăн пěрлехи экзаменěсене те пěрлех хатěрлентěмěр, пурне те ăнăçлă тытрăмăр. Пěр институтах вěренме кěтěмěр, шел, тěрлě факультета. Паллах, тěрлě общежитире пурăнатпăр. Анчах çакă пирěн туйăмсене сивěтмерě, пачах хирěçле, çирěплетрě çеç.

Халě эпир 3-мěш курсра вěренетпěр. 2014 çулта пěрлешме калаçса татăлтăмăр, çавна май хамăр та, тăвансемпе юлташсем те хěрсех туя хатěрленетпěр. Питě телейллě эпě, вěçсе-хăпартланса çеç çӳретěп, мěншěн тесен юрататăп. Çамрăксене акă мěн калас килет: телей тени чылай чухне хамăрпа юнашарах çӳрет, чи кирли – ăна вăхăтра асăрхамалла, алăран вěçертмелле мар.

■ **Карина В.**

*Кěскен*

## Проводник пулас килет-и?

***ЧР Вěренӳ министерствин Çамрăксен пуçарăвěсен центрě "Раççей студентсен отрячěсем" организацин Чăваш регион уйрăмěпе пěрле проводниксен отрядне йěркелеме пуçланă.***

Ку ěçе ЧР Министрсен Кабинечěн тата "Раççей чукун çулěсем" АУО тунă килěшěве тěпе хурса пурнăçлаççě. Пассажир вакунěсен проводникěсен отрядне куçăн майпа вěренекен студентсем, 18 çултан аслăраххисем, лекме пултараççě. Çуллахи вăхăтра – кăçалхи çěртме-çурла уйăхěсенче – ěçлес текенсем валли икě уйăхлăх тӳлевсěр курссем йěркелеççě. Лекцисене эрнере 2-3 хут ирттереççě, унта Раççей чукун çулěсен проводникěсен тивěçěсем тата ěç уйрăмлăхěсем пирки каласа кăтартаççě. Занятисем пуш уйăхěнче пуçланаççě. Асăннă курссенче вěреннисене РФ Ěçлев кодексне тěпе хурса ěçе илеççě, вěсен палăртнă вăхăт чухлě вăй хумалла. Çак условие пурнăçласан проводнике сертификациленě документ параççě, унпа вăл çулла çеç мар, ытти чухне те ěçлеме пултарать.

## "КиВиН" кěтет

***Чăваш Енри Хаваслисемпе Тавçăруллисен клубě вěренӳ организацийěсенчи КВН командисене республикăри çулсерен иртекен "Чăваш Ен КиВиНě" фестивале хутшăнма чěнет.***

Фестиваль пěтěмлетěвěсемпе килěшӳллěн командăсене лигăсем тăрăх уйăрěç, вěсенче кашниех 2014 çулăн чемпионě ятне çěнсе илессишěн тупăшě. Нарăс уйăхěн 16-мěшěнче И.Н.Ульянов ячěллě Чăваш патшалăх университечěн Культура керменěнче конкурс программисене кăтартмалла. Гала-концерт нарăс уйăхěн 23-мěшěнче иртě, унта фестивалěн чи лайăх номерěсемпе паллашма май пулě. Унтах Чăваш Ен лигин кăçалхи йышне палăртěç.

Асра юлакан мероприятие хутшăнас текенсен нарăс уйăхěн 14-мěшěччен www.квнчувашии.рф сайтра заявка хăвармалла. Сăмах май, ку фестивальте кашни çулах республикăн районěсемпе хулисенчи вěренӳ организацийěсенчи КВН 100 ытла команди хăйěн пултарулăхěпе паллаштарать.

*Çивěч ыйту*

## Усалпа пурин те кěрешмелле

***Ачасемпе çамрăксем наркотиксемпе иртěхни – хальхи обществăшăн чăнласах та çивěч ыйту. Вăл çěр-шыври кашни пиллěкмěш çынна тӳрремěнех е тата урăх енěпе пырса тивет. Специалистсем ěнентернě тăрăх – Раççейри наркомансен пěтěмěшле йышěнчен /статистика шута илнин/ 20% – шкул ачисем, 60% – 16-30 çулсенчисем, 20% – аслăраххисем.***

Ытти регионрипе танлаштарсан Чăваш Енре наркоманипе çыхăннă лару-тăру ытла хăрушах мар. Республикăри Наркотиксемпе кěрешекен комисси – федерацин Атăлçи округěнче чи лайăххисенчен пěри. Çакăн пирки Патшалăхăн наркотиксемпе кěрешекен комитечěн аппарачěн ертӳçин çумě – федерацин Атăлçи округěнчи управленин пуçлăхě, полици генерал-майорě Сергей Васильев Раççей ФСКНěн Чăваш Республикинчи управленийěн коллегийěн анлă ларăвě умěн пěлтерчě. Асăннă ларура наркополицейскисен иртнě çулхи ěç-хěлне те пěтěмлетрěç. Оперативлă лару-тăру япăхланманнине палăртрěç, çапах малашне те çине тăрса ěçлемелле тесе пěтěмлетрěç. Раççей ФСКНěн Чăваш Республикинчи управленийěн пуçлăхě, полици генерал-майорě Евгений Барсуков каланă тăрăх – кăçалхи кăрлач уйăхěн 1-мěшě тěлне республикăри наркологи учрежденийěсенче 3125 çын шутра тăнă. Пěлтěр "шурă наркăмăшăн" дозине ытлашшипех ӳстернěрен çын вилесси пěр тěслěх те пулман. Танлаштарма: 2012 çулта çакнашкал 1, 2011 çулта вара 7 инкек пулнă. Иртнě çул йěркене сыхлакан органсем наркотиксен саккунсăр çаврăнăшěпе çыхăннă 779 преступление тупса палăртнă. 455 çынна уголовлă явап тыттарнă. Çав шутра çул çитменнисемпе çамрăксем пурри хытах пăшăрхантарать. Пěлтěр вěренекенсемпе студентсен тěлěшпе 21 уголовлă ěç пуçарнă.

Чăваш Ен Пуçлăхě Михаил Игнатьев çак усалпа пурин те пěрле кěрешмеллине, ку енěпе çěнě инструментсем шырамаллине палăртрě. Халăх наркотиксене сивлетěр тесе малашне те çине тăрса ěçлемеллине асăнчě. "Хальхи вăхăтра эпир ачасемпе çамрăксен спорт юхăмне аталантарма тăрăшатпăр, физкультурăпа спорт пěтěм комплексне ДЮСШсене патăмăр. Çавăнпа пирěн хěр-упраçпа яш-кěрěм хушшинче спортпа тата физкультурăпа туслисен шучě ӳссе пырать. Ку – сывă пурнăç йěркине хăнăхтармалли чи ăнăçлă мел", – терě Михаил Васильевич. Çак шухăша республика Пуçлăхě ЧР Патшалăх Канашне янă Çырура та палăртнăччě: "Паян çамрăк çынсен ытларах та ытларах пайě япăх йăласенчен пăрăнса сывă пурнăç йěркине суйласа илет. Çакна тума вěсене влаç органěсем спорт сооруженийěсен тытăмне аталантарас енěпе пурнăçлакан тухăçлă ěç пулăшать. Юлашки çулсенче Чăваш Ен спорт инфратытăмěн аталанăвне тěрлě çăл куçран 5 млрд ытла тенкě хывнă, 50 ытла спорт объекчě тунă тата юсаса çěнетнě. Халăх йышлăн хутшăнакан спорт акцийěсем вăй илсе пыраççě, вěсем çынсене пысăк хастарлăх тата лайăх кăмăлтуйăм кӳреççě".

Унсăр пуçне пирěн республикăра ачасемпе çул çитменнисем наркотик таврашěпе ан туслашчăр тесе тěрлě акци йěркелеççě /тěслěхрен, "Çамрăксем наркотиксене хирěç", "Ăçта вилěм сутнине пěлтер" т.ыт.те/, профилактика мероприятийěсем ирттереççě. Специалистсем вěренӳ учрежденийěсенче ăс пухакан хěрсемпе каччăсене "шурă наркăмăш" мěн тери пысăк сиен кӳнине ăнлантараççě. "Наркомани мěншěнха çул çитменнисен хушшинче вăй илсе пырать? Ача çитěнсе-çирěпленсе çитеймен-ха, унăн йăлтах пěлес туртăм пысăк. 18 çул тултарманскерěн аслăрах курăнас, юлташěсенчен уйрăлса тăрас тата йывăрлăхсене çăмăллăн татса парас килет. Усал çак йăла пурнăçри çивěч ыйтусене татса пама пулăшманнине, пачах хирěçле, тата урăххисене, кăткăсраххисене кăларса тăратнине ăнланмасть-ха вăл. Нумайăшě наркотике пěрремěш хут юлташěсен ушкăнěнче, ташă каçěнче, клубра е шкулта ас тивет. Çак утăма чылайăшě ыттисенчен юлас мар е кăсăклăх çуралнăран тăвать", – теççě "шурă халатлисем".

Шкул ачисемпе студентсем наркотиксемпе туслашса ан кайччăр тесех ěнтě халě пěтěм шкулта, колледжсемпе техникумсенче, аслă шкулсенче тестсемпе медтěрěслевсем ирттерме йышăннă. Çакăн пирки калакан саккун пěлтěрхи раштав уйăхěн 5-мěшěнчен вăя кěчě. Тест витěр тухма килěшни пирки 15 çултан аслăраххисен хăйсен пěлтермелле, кěçěнреххисемшěн вара ку утăма ашшě-амăшě тăвě. Вěренекен е студент наркотикпе айкашни сисěнсен ăна нарколог патне ярěç, çакăн пирки никама та пěлтермěç.

Специалистсем ашшě-амăшне ачисем усал йăласемпе ан туслашчăр тесен профилактика калаçăвěсем ытларах ирттерме, вěсене пушă вăхăтне усăллă ирттермешкěн хăнăхтарма, тěрлě кружок-секцие явăçтарма сěнеççě. Унсăр пуçне ывăлхěр аслисенчен, чи малтан, паллах, сывăх çыннисенчен, тěслěх илме тăрăшнине аса илтереççě.

■ **Ирина СЕМЁНОВА**

*Ыйту-хурав*

## Илме май пур

**Нумаях пулмасть водитель правине илтěм. Автошкулта вěреннěшěн налукăн пěр пайне каялла илме май пур-ши?**

**Игорь В.**

Канаш районě.

Налук службин ěçченěсем пěлтернě тăрăх – çапла тума май пур. Автошкулăн вěрентӳ ěçне йěркелемешкěн ирěк паракан лицензи пур тăк унта вěренекен çын тӳлевěн пěр пайне каялла тавăрма пултарать. Çак тěллевпе унăн налук тапхăрě вěçленсен налук органне 3-НДФЛ формипе декларации памалла, курссенче вěреннине çирěплетекен документсене – учрежденипе тунă килěшěве, лицензи копине /енчен те килěшӳре лицензи пирки калани çук пулсан/, тӳлев хучěсене /квитанцисем, тěрěслевпе касса чекěсем, тӳлев порученийěсем, банк çырса пани т.ыт.те/ – тăратмалла. Декларацие тултарнă чухне сире тупăшсем пирки калакан справка /2-НДФЛ формăпа/ кирлě пулать, ăна ěç вырăнěнче параççě.

**Кăларăма Ирина КЛЕМЕНТЬЕВА хатěрленě.**

*Пирĕн шанăç*

# Олимп чĕкеçĕ




***Фристайл – спортăн çĕнĕ тĕсĕ, пирĕн çĕр-шывра аталанса кăна пырать-ха. Чăваш Енре фристайл енĕпе /«могул» дисциплинăра/ 27-ри Елена Муратова палăрчĕ. Вăл – пирĕн республикăран Олимп вăййисене хутшăнма хатĕрленекен пĕртен пĕр спортсменка. Уçă кăмăлласкер пирĕн ыйтусене хуравлама килĕшрĕ.***

**– Елена, спорт çулĕ çине хăçан тăтăн?**

– Манăн çывăх çыннăмсем çамрăк чухне спортсменсем пулнă: атте – йĕлтĕрçĕ, анне – фигурист. Халĕ вĕсем тренерта ĕçлеççĕ. Çавăнпа манăн иккĕшĕнчен пĕрне суйламаллаччĕ. 3-ре эпĕ конькипе ярăнма вĕрентĕм, каярах йĕлтĕр çине тăтăм. 14 çулта атте патне фристайлçăсен ушкăнне куçрăм. Унтах манăн аппа ăсталăха туптатчĕ, вăл – спорт мастерĕн кандидачĕ, халĕ ачасене вĕрентет.

**– Шкул хыççăн эсĕ Мускава пурăнма куçнă, 8 çул хула командин йышĕнче тăнă…**

– Учитель пулас тĕллевпе 2004 çулта педагогика колледжне вĕренме кĕтĕм. Çав вăхăтрах мана Мускавăн пĕрлештернĕ командине илчĕç, унччен эпĕ Мурманск облаçĕшĕн ăмăртнă. Çав çулах Раççей турнирĕнче призерсен йышне кĕтĕм. Унтан Европа кубокĕ, тĕнче чемпионачĕ... Çапла вара 2005 çулта çĕр-шыв командине лекрĕм. Спортпа вĕренĕве шайлаштарса пыма йывăрччĕ, çавăнпа колледжран пăрахса кайрăм. Каярах Раççей физкультура, спорт тата туризм университетĕнче пĕлӳ илтĕм. Унта спортсменсене уйрăм графикпа вĕренме ирĕк паратчĕç, çавăнпа ăмăртусене тухса çӳреме те çăмăлччĕ.

**– Ванкуверта иртнĕ Олимп вăййисене хутшăнма май пулнă санăн, анчах мĕншĕн унта лекеймерĕн?**

– Пĕр ăмăртура суранланнине пула çулталăк сиплентĕм. Пур пĕр 2010 çулта Раççей чемпионатĕнче çĕнтерме пултартăм. Каярах мана РФ фристайл федерацине ĕçлеме чĕнчĕç. Хама тĕрĕслесе пăхас тĕллевпе килĕшрĕм, пĕр тапхăр ски-кросс командин администраторĕнче вăй хутăм. Чăннипе спортсмена урăх отрасльте ĕçлеме çăмăл мар.

**– Çапах та каярах эсĕ каллех спорта таврăнтăн. Мĕн хистерĕ-ха?**

– Пĕрремĕшĕнчен, федераци ертӳçисем спортсменсемпе ĕçлеме Канада специалисчĕсене чĕнчĕç; иккĕмĕшĕнчен, эпĕ каллех тренировкăна çӳреме тытăнтăм. Çĕр-шыв чемпионатĕнче бронза медаль çĕнсе илни çĕнĕ вăй-хăват хушрĕ, спортсăр пурăнайманнине тинех ăнланса илтĕм.

**– Чăваш Енре хăçантанпа эсĕ?**

– Манăн нихăçан та Мускавра пурăнас килмен. Университетран вĕренсе тухнă хыççăн мана аттен тусĕ, Шупашкарти Олимп резервĕсен 2-мĕш спорт шкулĕн тренер-преподавателĕ Валерий Васильев /эпĕ те ăна тахçантанпах пĕлеттĕм/ Чăваш Ене чĕнчĕ те – килĕшрĕм. Çак утăма тунăшăн пĕрре те ӳкĕнместĕп, халĕ манăн кунта хваттер те пур.

**– Олимпиадăра санăн камсемпе тупăшма тивĕ?**

– АПШ тата Канада спортсменĕсем питĕ вăйлă. Вĕсем фристайл енĕпе чи малта пыракансем. Çапах эпир вĕсене парăнасшăн мар. Çавăнпа çулла та чылай ĕçлерĕмĕр, сборсене час-час тухса çӳрерĕмĕр. Программăна лайăхласси тата çĕнĕлĕхсене вĕренесси тĕп тĕллевсенчен пĕри пулчĕ. Олимпиадăна хатĕрленме чылай вăхăт кирлĕ пулин те эпĕ унта паллă фристайлçăсемпе тупăшассинчен шикленместĕп.

**– Эсĕ хăш тренерпа ытларах ĕçлетĕн?**

– Пирĕн вĕсем тăваттăн. Чи çывăххи вара маншăн акробатика ăсталăхне алла илме хăнăхтараканни. Канада çынни Дарси. Вăл кашни спортсменăн лайăх енĕсемпе çитменлĕхĕсене пĕлет, шухăш-кăмăлне туять. Дарси мана сикме вĕрентрĕ, халĕ эпĕ трасса çинче те хăюллă.

**– Олимпиадăна хутшăнассине пĕлсен аçу-аннӳ мĕн каларĕç…**

– Пăшăрханаççĕ паллах. Сочие пырасси пирки пĕлтерчĕç те – эпĕ хирĕçлерĕм. Вĕсем унта пулсан тата ытларах хумханăп. Паллах, спорт çыннисене Олимп вăййисене кайса курас килет, çапах та вĕсем мана ăнланаççĕ. Эпĕ вĕсене питĕ юрататăп, темле йывăр пулсан та пире ырăсывă ӳстерчĕç.

**– Çĕр-шывăн пĕрлештернĕ командинче 223 спортсмен. Чăваш Енрен эсĕ пĕччен. Пĕтĕм тĕнче ăмăртăвĕнчен мĕн кĕтетĕн?**

– Паллах, кашни спортсмен унта медаль çĕнсе илме ĕмĕтленет. Çакă чи пĕлтерĕшли. Манăн вара хамăн пултарулăхăма кăтартас килет. Трасса çинче хăнăхтарусене тĕрĕс те вырăнлă тăвасси пирки шухăшлатăп, тĕп вырăнта халĕ çитменлĕхсене пĕтересси. Мĕнле вырăн йышăнасси ăсталăхпа çыхăннă. Чи малтан – пахалăх, унтан – çитĕнӳ.

■ **Андрей МИХАЙЛОВ**
**хатĕрленĕ**

*Мухтавлă ентешсем*

# Чăваш çĕрĕ çутнă çăлтăр

***Кăçалхи кăрлачăн 31-мĕшĕнче Макар Евсевьевич Евсевьев çуралнăранпа 150 çул çитрĕ. Кам-ха вăл? Çакăн чухлĕ вăхăт иртнĕ хыççăн та хăй çинчен аса илтерме сăлтав тупса паракан çын?***

Ку ыйтăва пĕр енлĕн хуравлама йывăр. М.Евсевьев анлă пултарулăхлă ăсчах пулнă. Мордва халăхне çутта кăларассишĕн ĕçленĕ хушăра ăна чĕлхе, истори, литературăпа грамматика, географипе этнографи ыйтăвĕсем те кăсăклантарнă. Вăл Атăл тăрăхĕнче ирçе-мăкшă пурăнакан 400 ытла ялта пулма ĕлкĕрнĕ. Çавăн чухне вырăнти сăмахсене, грамматика формисене, халăхра çирĕпленнĕ йăлайĕркене, истори халапĕсене тĕпченĕ.

М.Евсевьев тунă улăпла ĕçе туллин хак пама паян витĕмлĕ сăмах тупма йывăр. Унăн ĕçĕсем XXI ĕмĕрти ăслăлăх çыннисене те шухăшлаттараççĕ. Унăн прогрессивлă педагогикăна аталантарас тĕлĕшпе тунă утăмĕсем ирçемăкшăсемшĕн кăна мар, Атăл тăрăхĕнчи вырăс мар халăхсемшĕн те пысăк пĕлтерĕшлĕ.

М.Е.Евсевьев 1864 çулхи кăрлачăн 31-мĕшĕнче хальхи Йĕпреç районне кĕрекен Ирçе Çармăс ялĕнче çуралнă. Ирина Петровнăпа Евсевий Тихонович Кабаевсем ачисене вĕреннĕ çынсем тăвассишĕн çуннă. 1872 çулта саккăр тултарнă Макара 7 çухрăмри Шурут шкулне вĕренме янă. Ача малтанхи кунсенчех çивĕч ăстăнĕпе, пултарулăхĕпе, илтнине хăвăрт ас туса юлнипе тĕлĕнтернĕ. Пуçламăш пĕлӳ илнине çирĕплетекен тĕрĕслевре Пăва земство училищин канашĕн председателĕ А.Баратынский тата Чĕмпĕр чăваш шкулĕн инспекторĕ И.Яковлев Ирçе Çармăс ачи пур предмета та лайăх пĕлнине, вырăсла та, чăвашла та уçăмлă, тĕрĕс каласнине палăртнă.

Шурут шкулĕнчен вĕренсе тухсан Макар икĕ çула яхăн ашшĕпе пĕрле вăрман касма, тунката кăклама, кĕтӳ кĕтме çӳрнĕ. 1878 çулта çурăм хыçне кутамкка çакса инçетри Хусан хулине çуранах тухса утнă. Анчах чухăн çын ачине ниçта та вĕренме илесшĕн пулман. Каярах тин вак халăхсен семинарийĕн алăкĕ яриех уçăлнă уншăн. Тăрăшса вĕреннĕ мал ĕмĕтлĕ çамрăк. Унăн гуманитари ăслăлăхĕсен, уйрăмах филологи, енне пысăк туртăм пуррине асăрханă преподавательсем. Çав вăхăтра студент тĕпчев ĕçĕнче малтанхи утăмсем тума пуçланă. Тăрăшни, ăнтăлни сая кайман. М.Евсевьева семинарире ĕçлеме хăварнă. Пултаруллă çамрăка кĕçех Хусанти ăсчахсем кăна мар, Мускаври, Питĕрти, Раççейĕн ытти наука центрĕсенче асăрханă. Вăл Хусан университечĕн профессорĕпе П.Вескепе, финн тĕпчевçисемпе Х.Паасоненпа, А.Гейкельпе тата вырăссен паллă академикĕпе А.Шахматовпа çыхăну тытма пуçланă.

М.Евсевьев 1885 çулта финн ăсчахĕпе А.Гейкельпе пĕрле этнографин пĕрремĕш экспедицине кайнă. Çул çӳревĕн тĕллевĕ – тĕрлĕ йăх-ăру килхуралтипе çи-пуç тĕслĕхĕсене тĕпчесси. Вĕсем ун чухне Ирçе Çармăсра, Вăрманхĕрри Чурачăкра, Пучинкере, Кĕлĕмкассинче пулнă, асăннă ялсенчи çурт-йĕре тĕпченĕ, чăваш кĕллисене лайăх пĕлекенсемпе курса калаçнă, чăваш хĕрĕсемпе каччисен ушкăнпа вăйă картинче юрланă, юрăтакмака çыра-çыра илнĕ. «1885 çулхи утă уйăхĕн 3-мĕшĕнче ирхи 6 сехетре эпир Ирçе Çармăсран тухса кайрăмăр. Каç пулттипе Улатăр уесĕнчи ирçесем пурăнакан Атрать салине çитрĕмĕр», – çырнă кайран Макар Евсевьев пĕр аса илĕвĕнче. Халĕ вăл Ирçе Çармăс вăтам шкулĕн М.Евсевьев музейĕнче упранать.



● *М.Евсевьев.*

Шкул халăха çутта кăларас ĕçре уйрăмах пысăк вырăн йышăннине тĕпе хурса вак халăхсем йышлăн пурăнакан вырăнсенче пĕлӳ çурчĕсем ытларах уçмаллине палăртнă. Çак тĕллевпе вăл 1885 çулта ирçепе мăкшă ачисем валли букварь, тепĕр виçĕ çултан вырăс чĕлхин учебникне хатĕрленĕ.

«Педагогăн хăйĕн те вĕренмелле, çĕннине алла илмелле», – тенĕ Макар Евсевьевич. Пушă сăмахсем пулман вĕсем. Çамрăк тĕпчевçĕ тĕллевне кулленхи ăнтăлăвĕпе çирĕплетсе пынă: 1889 çулта вăл уес училищин вĕрентекенĕ пулма экзамен тытнă, ун хыççăнах Хусан университечĕн историпе филологи факультетне вĕренме кĕнĕ. Диплом илсен М.Евсевьев тăван халăх валли ăста кадрсем хатĕрлессишĕн ĕçленĕ, ăслăлăх статйисем нумай çырнă, шыравтĕпчеве хутшăннă т.ыт.те. Ăсчах пĕр хушă Хусанти Хĕвел тухăç академийĕнче, Хĕвел тухăç педагогика институтĕнче, 1925-1930 çулсенче Хусанти Коммунистсен университетĕнче лекцисем вуланă. Тĕпчевçĕ «Мордвалла-вырăсла словарь», «Мордва грамматики», «Мордва туйĕ», «Мордва юррисем», «Мăкшă туйĕ», «Мăкшă юррисемпе тупмалли юмахсем» тата ытти ĕçе вулакан патне çитернĕ. «Вăл тунă улăпла ĕçе паттăрлăхпа танлаштарма пулать. Çулсем иртнĕ май унăн еткерлĕхĕн пĕлтерĕшĕ ытларах уçăмланчĕ», – çырнă ун пирки ирçе писателĕ, Патăрьел тăрăхĕнчи Шăхач ялĕнче çуралса ӳснĕ, Евсевьевăн тăван ялĕнче ачасене вырăс чĕлхипе литературине вĕрентнĕ Иван Антонов.

М.Евсевьев 1931 çулхи çу уйăхĕн 10-мĕшĕнче вилнĕ, ăна Хусанти Ар масарĕнче Н.Лобачевский математикпа юнашар пытарнă. Халăх ыйтнипе паллă ăсчахăн вил тăприне темиçе çул каялла Саранск хулине куçарнă. Халĕ вăл Мордва Республикин тĕп хулинче паллă çынсен пантеонĕнче выртать. Кунти педагогика институчĕ М.Евсевьев ячĕпе хисепленет, республикăри ăслăлăх-тĕпчев институтĕнче профессорăн пуян архивĕ пур. Мордва кĕнеке издательстви унти материалсемпе усă курса паллă фольклорист ирçе-мăкшăсен хушшинче пухнă юрă-сăвва 5 томпа пичетлесе кăларнă.

Ирçе Çармăсри вăтам шкул картишĕнче 30 çул каялла лартнă бронза палăк çамрăк ăрăва тĕпчевсем тума, шырав ĕçĕсене хăтшăнма чĕннĕнех туйăнать. Шкул мухтавлă ентеш ячĕпе хисепленет. Тавра пĕлӳ музейĕнче М.Евсевьевăн ал çырăвĕсен, сăн ӳкерчĕкĕсен, ытти тĕрлĕ документăн копийĕсем тата кĕнекисем упранаççĕ.

М.Евсевьев Н.Ильминские, Н.Ашмарина тата Н.Никольские питĕ лайăх пĕлнĕ. Вĕсемпе вырăс мар халăхсен вĕрентекенĕсене хатĕрлекен семинарийĕнче пĕрле ĕçленĕ. Кайран вĕсенчен ырă тĕслĕх илсе ирçепе мăкшă сăмахсарне хатĕрлеме тата ирçе чĕлхипе тухакан хаçата кăларма хутшăннă. «Якстере теште» /Хĕрлĕ Çăлтăр/ хаçатăн пĕрремĕш редакторĕ пулнă çулсенче М.Евсевьев литературăра пуçламăш утăмсем тăвакан яш-кĕрĕмĕн хайлавĕсене сахал мар кун çути кăтартнă. Çав хаçатра профессорăн çывăх тăванĕн, Ирçе Çармăсра çуралса ӳснĕ, кайран мордва прозине пуçласа янă П.Глуховăн «Кедр мăйăрĕсем» калавĕ те пичетленнĕ.

Мордва халăхĕн патриархĕ М.Евсевьев çуралнăранпа 150 çул çитнине халалласа кăрлачăн 30-мĕшĕнче Саранскра ăслăлăх-практика конференцийĕ иртнĕ. Юбилее паллă тума çавăн пекех ăсчах çуралса ӳснĕ Ирçе Çармăс салине тăванла икĕ республикăран хăнасем килнĕ.

■ **Геннадий КУЗНЕЦОВ**

*Юбилей*

# Ĕмĕтленни çитсе пытăр

***Эпĕ унпа аслă шкулта ăс пухнă чух паллашнăччĕ. Унтанпа аллă çул та иртрĕ ĕнтĕ. Ытти студентсенчен вăл нимĕнпе те уйрăлса тăмастчĕ. Учитель пулас ĕмĕт ăна та педагогика институтне илсе çитернĕ. Вăхăт иртнĕçемĕн хытканрах кĕлеткеллĕ, çаврăнăçуллă та пур çĕрте те вăр-вар çамрăк хăйне урăх енчен кăтартма тытăнчĕ. Вĕренӳре лайăх ĕлкĕрсе пынисĕр пуçне тĕрлĕ мероприятие хастар хутшăнма пуçларĕ. Вăл çырнă статьясем республика хаçачĕсенче тăтăшах пичетленетчĕç.***

Хăй каланă тăрăх – унăн пĕрремĕш информацийĕ вăл вун тăваттăра чухне /1958 çулта/ «Коммунизм ялавĕ» /халĕ «Хыпар»/ хаçатра кун çути курнă. Кунсăр пуçне институтри наука конференцийĕсемпе спорт ăмăртăвĕсем те вăл хутшăнмасăр иртмен темелле. «Çуралсанах эпĕ питĕ хавшак, начар ача пулнă, – иртнине аса илет вăл. – Анне каланă тăрăх – сăпка таврашĕ пулманран чи малтан мана асатте çĕлĕкĕнче усранă. Вилет пулĕ тесе ят хума та васкаман. Каярахпа çеç, çулсем иртсен, вăй илтĕм, çын шутне кĕтĕм. Спортпа çывăх туслашни çирĕп, патвар çитĕнме пулăшрĕ. Салтакра та пултăм. Халĕ те турник çинче тĕрлĕ хускану тума юрататăп, пĕр чăрмавсăр шпагат ларатăп. Çамрăксем те ăмсанаççĕ хăш чухне».



Осип Алексеев – Ăсан Уçăпĕ – Красноармейски районĕнчи Санькассинче 1944 çулхи нарăсăн 3-мĕшĕнче çуралнă. Тăван ялĕнчи тăватă, Шуркари çичĕ класлă, Чурачăк салинчи вăтам шкулсем хыççăн И.Я.Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика институтĕнче вĕреннĕ. Часах ăна Совет Çарне илнĕ. Вăл Çĕпĕрпе Урал тăрăхĕнче аслă çĕр-шывăмăрăн сывлăш чиккине виçĕ çул сыхланă, старшинана çити ӳснĕ.

Салтак тумне хывнă çулах çамрăк каччă аслă шкул партти хушшине ларнă, çитмĕлмĕш çулăн пуçламăшĕнче И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетĕнчен вĕренсе тухнă. Диплом илсен Вăрмар районĕнчи Кĕлкешри вăтам шкулта икĕ çул ачасене тăван чĕлхепе литературăна вĕрентнĕ хыççăн Çĕрпӳри «Октябрь çулĕпе» хаçатра, Шупашкара куçса килсен хулари промышленноç предприятийĕсен нумай тиражлă хаçачĕсен редакцийĕсенче ĕçленĕ. Партин Чул хулари аслă шкулĕнчен пĕлĕвне ӳстерсе таврăнсан – вунă çула яхăн «Коммунизм ялавĕ» хаçатăн яваплă секретарĕн çумĕнче, «Капкăн» журналта, «Çил çунат» журналăн яваплă секретарĕнче-редактор çумĕнче.

Çак тапхăрта мĕн чухлĕ статья çырман-ши? Культурăпа искусствăра, литературăра палăрнă вун-вун çын пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлне çутатнă вĕсенче. Хайлавĕсем Мускаври журналсенче те çапăнса тухнă. Вăл çитĕннисене калавсем çеç мар, пĕчĕккисене те шӳтхалаппа самаях савăнтарнă.

Пĕр-пĕрне çывăх пĕлнĕрен эпĕ унран хушма ят мĕнле «çыпçăнни» çинчен тĕплĕнрех каласа пама ыйтрăм.

– Хушма ята эпĕ пĕрремĕш класра вĕреннĕ чухнех «туянтăм». «У» сас паллипе паллашнă вăхăтра букварьти пĕчĕк калавра çакăн пек çыру йĕркисем пурччĕ: «Уçăп сунара кайнă. Хураçки малта пынă. Уçăп ăсан тытнă». Вăт çакăн хыççăн пуçланчĕ те пĕтĕм тамаша! Шкулта пĕрле вĕренекенсем, хамăр класри ачасем мана «ăсан» тесе витлеме пуçларĕç. Алла ручка тытса шур хута варалама тытăнсан çак ят патне тепĕр хут таврăнтăм, çапла вара эпĕ Ăсан Уçăпĕ пулса тăтăм, – çакăн пек хурав пулчĕ унăн. Паян кун та çакăнпах çӳрет.

Тăван чăваш литература лаççинче çур ĕмĕре яхăн вăй хурса Ăсан Уçăпĕ чылай хайлав шăратса-туптаса кăларчĕ. Вĕсенчен хăшĕ-пĕрне асăнса хăварни те çителĕклĕ пулĕ – «Чăваш вăрманĕ» /икĕ кăларăм/, «Ăсан Уçăпĕ сунарçă» /виçĕ кăларăм/, «Савнă ялăм, тăван ялăм – Санькасси», «Трак ен» /икĕ кăларăм/, «Крепче за баранку держись, шофер», «Сатурн çинчи ăсан» /икĕ кăларăм/, «Шăнкăр-шăнкăр çăл куç...», «Кайăксем вĕçекен тӳперен» кĕнекесем. Вăл Раççей Журналистсен тата Раççей Писательсен пĕрлĕхĕсенче тăрать, Нестер Янкас тата Петр Маркин /Лесной/ ячĕллĕ премисене тивĕçнĕ. Унăн пултарулăхĕ пирки хаçат-журналта пĕрре мар çырнă.

Темиçе çул каялла, «Чăваш вăрманĕ» кĕнекине мана çырса парнеленĕ чухне, çапларах юмахланине ас тăватăп: «Эпĕ ача чухнех çут çанталăка юрататтăм, уçă сывлăшра уçăлса çӳреме килĕштереттĕм. Шкул инçе пулнăран вăрман витĕр тухма, уйсем урлă каçма тиветчĕ. Çавăн чухне мана, шкул ачине, çут çанталăкăн асамлă вăйĕ хăйĕн тыткăнне илчĕ. Кашни йывăç-курăк, кашни чĕр чун маншăн хăйне евĕр тус та сăнар пулса тăчĕ».

Çак туйăм, чун-чĕре киленĕвĕ унăн халĕ те сĕвĕрĕлмен-ха. Пирĕн сад-пахча юнашар пулнăран çакна уççăнах калатăп эпĕ. Пилĕк сотка çĕр çинче мĕн кăна ӳстерместь-ши вăл? Тĕрлĕ сăнав тăвать, çуркунне юр кайса пĕтсе хура кĕркуннеччен кăштăртатать, пуç çĕклемесĕр тăрмашать. Паха сортлă пахча çимĕçĕ те, пуян улми-çырли те яланах тулăх унăн. Иртенçӳрене вĕсемпе сăйлама та кăмăлĕ уçă. Ку ĕçре ăна пулăшаканĕсем те тăтăшах пырса çӳреççĕ. Вăл мăшăрĕпе Наталия Степановнăпа икĕ хĕрпе пĕр ывăла ура çине тăратнă. Шел те, мăшăрĕ тăватă мăнукĕпе савăнса-йăпанса кураймарĕ, темиçе çул каялла вăхăтсăр уйрăлса кайрĕ.

Осип Алексеевич çитмĕл çула çитрĕ пулсан та унăн пултарулăхĕ иксĕлми хăватпа тапса тăрать. Ăнăçу пултăр, ĕмĕтленни пурнăçа кĕтĕр.

■ **Вячеслав ШИНГАРЕВ**

# Вăл – аваллăх управçи

***Валентина Николаева Çĕрпӳ районĕнчи Вăрманкас Кĕçтемĕр ялĕнче çуралнă. 1996 çулта Трак тăрăхĕнчи Танăш ял каччипе – Эдуард Гавриловпа – çемье çавăрнă. Туслă кил-йышра икĕ хĕр çитĕнет: Маргарита Красноармейскинчи вăтам шкулăн 10-мĕш, Юлиана Кĕçĕн Шетмĕри шкулăн 4-мĕш класĕсене çӳреççĕ.***



●*Музей-ӳкерчĕксен галерейин пуçлăхĕ Валентина Николаева.*

Валентина Михайловна 2007 çултанпа Кĕçĕн Шетмĕ ял тăрăхĕн администраципе хуçалăх пайĕнче тăрăшать. Кунсăр пуçне вăл ялти Элли Юрьев ячĕллĕ музей-ӳкерчĕксен галерейин пуçлăхĕ те.

– Тăван тăрăх историйĕ питĕ пуян. Паллă çын чылайăн тухнă кунтан. Вĕсем пирки ытларах пĕлес, ыттисене каласа парас килет. Истори темипе çырнă кĕнекесем, хаçат-журнал, çав шутра – «Хыпара» та, вулама кăмăллатăп, – тет вăл.

Элли Юрьев ячĕллĕ музей-ӳкерчĕксен галерейине Кĕçĕн Шетмĕре виçĕм çул уçнă. Икĕ хутлă çуртăн çӳлти пайне йышăнать вăл. Пĕрремĕш хутра ача сачĕпе медпункт вырнаçнă. Музейре – виçĕ зал. Пысăккинче паллă ентеш-ӳнерçĕн, Чăваш халăх художникĕн Элли Юрьевăн пурнăçĕпе тата ĕçĕ-хĕлĕпе паллаштаракан стендсемпе витринăсем вырнаçтарнă, вăл тунă ӳкерчĕксем те кунтах вырăн тупнă. Иккĕмĕшĕнче сумлă тепĕр ентешĕмĕрĕн, Танăш ялĕнче çуралнă Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ художникĕн Георгий Николаевăн ӳкерчĕкĕсене курăнмалла вырнаçтарнă. Виççĕмĕш залра – Трак ен ӳнерçисен – Алексей Григорьевăн /Четрик ялĕ/, Николай Егоровăн /Çырмапуç Карай/, Феврония Ивановăн /Кăмакал/, Николай Кривошеевăн /Красноармейски/ тата Юрий Филипповăн /Яманак/ ĕçĕсем. Тепĕр пӳлĕмре – И.Я.Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университетĕнчен тĕрлĕ çулта вĕренсе тухнисен диплом ĕçĕсем, Чăваш халăх поэтне Юрий Сементере тусюлташĕсем юбилей ячĕпе парнеленĕ йывăçран хатĕрленĕ япаласем тата ытти экспонат.

Кăçалхи кăрлач уйăхĕн пуçламăшĕнче кунта хамăрăн мухтавлă тепĕр ентеше – Раççей Федерацийĕн тата Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ артистне Виталий Петрова халалланă пӳлĕм уçăлнă. Унăн пултарулăхĕн стенчĕсене тĕпрен çĕнетнĕ.

Халĕччен Кĕçĕн Шетмĕри Элли Юрьев ячĕллĕ музей-ӳкерчĕксен галерейинче 2 пине яхăн çын пулса курнă.

■ **Виктор ДАНИЛОВ.**
Сăн ӳкерчĕкĕ авторăн

# Ишесси

*Спорт хроники*

Çĕнĕ Шупашкарти 50 метрлă бассейнра çамрăк ишевçĕсен Пĕтĕм Раççейри турнирĕ иртнĕ. Тĕп парнесене çĕнсе илессишĕн Тольятти, Хусан, Йошкар-Ола, Чĕмпĕр хулисенчен килнĕ 520 спортсмен тупăшнă. Чăваш Ен ишевçисенчен уйрăмах Шупашкарти Олимп резервĕсен ятарлă 9-мĕш спорт шкулĕнче ăсталăха туптакансем палăрнă. 2003 çулта çуралнă ачасен ушкăнĕнче ентешсем пĕрремĕш вырăн йышăннă, 10 çултисен хушшинче пирĕннисем иккĕмĕш пулнă. Эстафетăра спорт шкулĕн вĕренекенĕсем виçĕ хут пьедесталăн чи çӳллĕ картлашки çине хăпарнă. Ăмăрту пĕтĕмлетĕвĕпе Чăваш Ен командин – 8 ылтăн, 5 кĕмĕл, 5 бронза медаль.

# Биатлон

Чăваш Енĕн пултаруллă биатлонçи Павел Охотников Тюмень облаçĕнчи Уват хулинче иртнĕ федерацин Урал округĕн ăмăртăвĕнчен тепĕр çитĕнӳпе таврăннă. Шупашкарти Олимп резервĕсен ятарлă 2-мĕш спорт шкулĕнче Геральд Салдимиров патĕнче ăсталăха туптакан спортсмен масстартра иккĕмĕш вырăн йышăннă. Аса илтеретпĕр: нумаях пулмасть вăл çĕр-шыв кубокĕнче виççĕмĕш кăтартупа палăрнăччĕ.

Çамрăк спортсменсем Саранскра иртнĕ федерацин Атăлçи округĕн ăмăртăвĕнче те наградăсăр юлман. 16-18 çулсенчи хĕрсемпе каччăсен икĕ команди эстафетăра пухмача икĕ «бронзăпа» пуянлатнă.

■ **А.МИХАЙЛОВ**

Факс: /8352/ 28-83-70.
E-mail:hypar2008@rambler.ru
**реклама пĕлтерӳ**
Тел.: 28-83-70.
316-мĕш пӳлĕмре йышăнаççĕ.

**Объявляется набор на подготовительные курсы**
для поступления в Чувашский государственный
институт культуры и искусств по специальности
**"Актер театра и кино".**
Собеседование состоится в Чувашском
государственном театре кукол 9 февраля в 12.00.
По адресу: г. Чебоксары, Президентский бульвар,15
**Справки по тел.: (8352) 62-14-10, 44-08-53, 62-38-40**

**23 апреля** зал Чувашской государственной филармонии **начало 18-30**
**100-летию со дня рождения выдающегося чувашского композитора и дирижера А.Г.Орлова-Шузьма посвящается**
ЗАКРЫТИЕ 90-го КОНЦЕРТНОГО СЕЗОНА
КОНЦЕРТ Чувашского государственного академического ансамбля песни и танца
Справки по тел. 62-14-83, 62-54-48.

Администрация Аликовского района Чувашской Республики **"12" марта 2014 года в 11 час. 10 мин.** объявляет торги (открытый аукцион) по продаже права на заключение договора аренды земельного участка без обременения:
**Характеристика объекта права на заключение договора аренды земельного участка:**
**Лот №1** - земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения с кадастровым номером 21:07:000000:2858, расположенного по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, р-н Аликовский, с/пос. Питишевское, для сельскохозяйственного производства, общей площадью 63385 кв.м. Начальная (стартовая аукционная) цена участка - 3074 (три тысячи семьдесят четыре) рубля 00 копеек.
**Сумма задатка** - 20% от начальной (стартовой аукционной) цены Участков.
**Шаг аукциона** - 5% от начальной (стартовой аукционной) цены Участков.
Заявки на участие в аукционе принимаются до 10.00 часов 05.03.2014 г.
За справками и информацией обращаться в отдел экономики, земельных и имущественных отношений администрации Аликовского района в каб. №48 и на сайте администрации района www.alikov.cap.ru (баннер - "Объявления").

**ПРОДАЮ**
**7.Срубы для бани.** Т. 37-28-74.

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ Чăваш Республикин пĕрремĕш суйлаври Патшалăх Канашĕн депутачĕн, отставкăри генерал-майорăн Вячеслав Архипович Тихоновăн ывăлĕ
**Игорь Вячеславович ТИХОНОВ**
вилнĕ пирки унпа пĕрле хурланнине пĕлтерет.

чăваш халăх хаçачĕ
**ХЫПАР**



УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ – ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН МИНИСТРСЕН КАБИНЕЧĔ, "ХЫПАР" ХАÇАТ РЕДАКЦИЙĔ
Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен сферинчи надзор службин Чăваш Республикинчи управленийĕнче 2013 çулхи çу уйăхĕн 31-мĕшĕнче ПИ ТУ21-00281 №-пе регистрациленĕ
"Хыпар" индексĕ – 54800, "Чăваш хĕрарăмĕ" – 11515,
"Хыпар"-шăмат кун" – 78353, "Сывлăх" – 11524,
"Çамрăксен хаçачĕ" – 54804, "Кил-çурт, хушма хуçалăх" – 54806.

Директор-тĕп редактор **А.П.ЛЕОНТЬЕВ**
Номер редакторĕ **М.М.АРЛАНОВ**
**РЕДКОЛЛЕГИ:**
**М.М.АРЛАНОВ** /тĕп редактор çумĕ/
**А.П.ЛЕОНТЬЕВ** / директор – тĕп редактор/
**Г.А.МАКСИМОВ** /тĕп редактор çумĕ/
**С.Л.ПАВЛОВ** /тĕп редактор çумĕ/
**Н.Г.СМИРНОВА** /культурăпа чăваш диаспорин пайĕн редакторĕ/
**Ф.П.ЧЕРНОВ** /яваплă секретарь – техника центрĕн пуçлăхĕ/
Дежурнăй редактор **В.Н.БАГАДЕРОВА**

**Адрес: 428019, ШУПАШКАР, ИВАН ЯКОВЛЕВ ПРОСПЕКЧĔ, 13, ПИЧЕТ ÇУРЧĔ, III ХУТ, "ХЫПАР".**
ТЕЛЕФОНСЕМ
**Редакци телефонĕсем:**
56-00-67 – директор – тĕп редактор
56-33-64 – тĕп редактор çумĕ
56-04-17 – тĕп редактор çумĕ
62-08-62 – секретариат, яваплă секретарь
**пайсем:**
28-85-01 – общество пурнăçĕпе политика пайĕ
56-05-21 – журналист тĕпчевĕсен тата куçару пайĕ
56-08-62 – экономика пайĕ
56-03-04, 28-85-91 – социаллă пурнăçпа вĕренӳ пайĕ
56-08-61 – культурăпа чăваш диаспорин пайĕ
56-04-26, 28-85-87 – хроникăпа хамăр корреспондентсен пайĕ
28-82-91 – корректорсем
56-45-94 – фотокорреспондент
**бухгалтери** – 28-83-64
**коммерци дирекцийĕ:**
28-83-70 – рекламăпа пĕлтерӳсен пайĕ
56-20-07 – çырăнтарупа реализаци пайĕ
**корр. пункчĕсем:**
8-937-398-75-33 – Хĕрлĕ Чутай,
/8-835-38/ 2-18-02, 2-11-95 – Йĕпреç
28-85-71 – Чăваш Республикин Журналистсен союзĕн правленийĕ
hypar2008@rambler.ru
**Ĕç кунĕ 8 сехет те 45 минутран пуçласа 17 сехет те 45 минутчен, шăмат кунпа вырсарни кунсăр пуçне.**

**Факс:** /8352/ 28-83-70
**Электрон почта:**
hypar1@mail.ru
hypar@mail.ru

**Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13. 56-00-23 – издательство директорĕ.**

**РЕКЛАМĂПА ПĔЛТЕРӲСЕНЕ 316-мĕш пӳлĕмре йышăнаççĕ. Тел. 28-83-70.**
Офсет пичечĕ. Калăпăшĕ 2 пичет листи. Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.
Хаçатри рекламăсăр тӳлевлĕ информаци материалĕсем "Реклама çинчен" федераци саккунĕн 2 ст. килĕшӳллĕн **"Аталану çулĕпе", "Ят-сум", "Ĕç тата çын", "Самана таппи", "Компетентлă"** рубрикăсемпе пичетленеççĕ.
Пичете графикпа 21 сехетре алă пусмалла, 20 сехет те 45 минутра алă пуснă.
Тираж 7871. Заказ 375.